ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

1953 çул Март 13 ЭРНЕКУН № 52 (8961)
36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Тулашри политика тĕлĕшпе пирĕн тĕп ĕç—çĕнĕ вăрçă пулмалла мар тăвасси, пур çĕршывсемпе те мирлĕ пурăнасси пулать. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ, Совет Правительстви çапла шутлаççĕ: чи тĕрĕс, чи кирлĕ тата чи тÿрĕ тулашри политика вăл—мĕнпур халăхсем хушшинчи мир политики, пĕр-пĕрне шанса тăни çинче никĕсленсе тăракан, ĕçлĕ, фактсем çине таянакан тата фактсемпе çирĕплетсе панă политика пулать.

(Г. М. Маленков юлташ сăмахĕнчен).



Союзсен çурчĕн Колоннăллă залĕнче 1953 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче. Ÿкерчĕк çинче (сулахайран сылтăмалла): В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, Н. А. Булганин, Н. С. Хрущев, Л. М. Каганович, А. И. Микоян юлташсем И. В. Сталин тупăкĕ умĕнче.

В. Савостьянов фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Халăхсем мире сыхласа хăварассишĕн чĕререн тăрăшаççĕ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне тата Совет Правительстви ячĕпе пур çĕртен те хурланса пĕлтернисем вĕçĕ-хĕррисĕр килсе тăраççĕ. Мĕнпур çĕршывсенчи, мĕнпур континентсенчи çĕршер миллион çынсем этемлĕхĕн асларан та аслă генийĕн, мир ялавне çĕклесе пыраканĕн Иосиф Виссарионович Сталинăн таса ятне чĕререн асăнса хисеплеççĕ.

Хурланса пĕлтернисем тĕнчен пур кĕтесĕсенчен те, пур чĕлхесемпе те килсе тăраççĕ. Вĕсене рабочисемпе хресченсем, наукăпа искусство представителĕсем, обществăпа государство деятелĕсем, правительствăсем, организацисем тата уйрăм гражданcем ярса параççĕ. Çав вĕçĕ-хĕррисĕр килсе тăракан хурлăхлă пĕлтерÿсенче пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем Сталин юлташа, Ленинпа пĕрле этемлĕх валли историре çĕнĕ çулсем хывса хăварнă аслă çулпуçа, пĕтĕм чĕререн хĕрÿллĕн юратса тăни яр-уççăн палăрать.

Аслă Сталин вилнĕ пирки мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисем вĕçĕмсĕр хурланни Ленин—Сталин идейисем халăхсен анлă массисем хушшине çав тери тарăн кĕрсе вырнаçнине уçăмлăн кăтартса парать.

Сталин юлташ ССР Союзĕнчи халăхсемшĕн, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисемшĕн тунă ĕçсем калама çук пысăк. Марксизмăн аслă теоретикĕ Сталин юлташ пĕтĕм тĕнчери халăх массисем валли çутă пуласлăх патне каймалли çула генииллĕ ăслăн çутатса пачĕ. Унăн классикла ĕçĕсем марксизм-ленинизмăн чăн-чăн энциклопедийĕ пулса тăраççĕ. Хĕвеланăçнчи капитализмла çĕршывсемпе Хĕвелтухăçĕнчи колониллĕ çĕршывсенчи коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисем, миллионшар ĕçсыннисем Сталин ĕçĕсенче хăйсене хумхантаракан пур ыйтусем пирки те ответ илеççĕ.

Этемлĕхе аркатуллă вăрçăсенчен хăтарас ĕçшĕн хăйĕн пĕтĕм çутă пурнăçне панă, мир ялавне çĕклесе пыракан аслă И. В. Сталина пĕтĕм чĕререн тав туса асăнни çĕршер миллион çынсен чĕринче ĕмĕр-ĕмĕрех сыхланса пурăнĕ. Ленинпа пĕрле Сталин юлташ пирĕн социализмла аслă государствăна—мирпе халăхсен хăрушсăрлăхĕн никĕсне аркатайми тĕрекне туса çирĕплетрĕ. Хăйĕн характерне пула, Совет Çĕршывĕ захватчикла вăрçăсене хирĕç яланах тăнă, ытти государствăсен ĕçне хутшăнассине хирĕç яланах тăнă, халĕ те хирĕç тăрать, малашне те хирĕç тăрĕ.

Сталин юлташ хăйĕн генийĕн асларан та аслă вăйне мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем валли мире хÿтĕлесе хăварас ĕçшĕн панă. Аслă Сталин ертсе пынипе, пирĕн халăх тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра фашизма çĕнтерсе пĕтĕм тĕнчипе паллă историллĕ çĕнтерÿ турĕ, нумай вăхăтлăха пыракан çирĕп мир патне пымалли тĕрĕс çул-йĕре кăтартса пачĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе, пирĕн партипе правительство мир политикине çине тăрса тата çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пычĕç, çав политикăна мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем тивĕçлипех ленинла-сталинла политика тесе ят пачĕç.

Халăх ырлăхĕшĕн тăрăшасси, халăх ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртесси Коммунистсен партийĕшĕн чи аслă закон пулса тăрать. Мĕнпур халăхсен чи пысăк ĕмĕчĕ вăл—мир пулать. Империализмла çăткăнсен пĕчĕк ушкăнĕ кăна вăрçă чĕртсе ярассишĕн çунать. Миллионшар та миллионшар ахаль çынсем вăра вăрçа курайманççĕ, вĕсем вăрçă чĕртекенсене пĕр кăмăллă пулса ылханаççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе правительствăшăн халăхсем çакăн пек мире сыхласа хăварма ĕмĕтленни чи таса ĕмĕт пулать. Мире тĕреклетесси пирĕн партипе правительствăшăн тулашри политика тĕлĕшпе чи кирлĕ тивĕç пулса тăрать.

Пĕтĕм совет халăхĕн ирĕкне палăртса парса, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Г. М. Маленков юлташ, СССР Министрĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕсем Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсем хăйсем 1953 çулхи мартăн 9-мĕшĕнче хурлăхлă митингра каланă сăмахсенче ССР Союзĕн тулашри мирлĕ политикине питех те уççăн кăтартса пачĕç. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе правительство чи тĕрĕс, чи кирлĕ тата чи тÿрĕ тулашри политика тесе мĕнпур халăхсем хушшинчи мир политикине, пĕр-пĕрне шанни çинче никĕсленсе тăракан ĕçлĕ политикăна, фактсем çине таянса тăракан тата фактсемпе çирĕплетсе панă политикăна шутлаççĕ. Шăпах та ĕнтĕ çакăн пек тулашри политикăна—мире сыхласа хăвармалли тата тĕреклетмелли сталинла политикăна—пирĕн çĕршыв пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пырать.

Мир тăшманĕсем темĕнле ирсĕр ĕçсемпе провокацисем тусан та, халăхсем çакна пĕлсе тăраççĕ: Совет Союзĕ мир ĕçне вĕçне çитиех парăнса тăрать, миллионшар çынсен юнне тăкмалла мар тăвас тесе, телейлĕ пурнăçа мирлĕн туса пымалла пултăр тесе, вăл мĕн май килнине пурне те тăвать.

Çĕнĕ вăрçă çулăмне тĕнче тăрăх çĕклесе çÿрекенсем çакна асра тытчăр: халăхсене улталама шутлакан, халăхсем мире сыхласа хăварма, çĕнĕ юнлă çапăçу пулмалла мар тума пĕтĕм чĕререн ĕмĕтленнине хирĕç каякан правительствăсем преступниксем пулĕç!

Миршĕн кĕрешесси халĕ мĕнпур çĕршывсенчи çĕршер миллион ахаль çынсен ĕçĕ пулса тăчĕ. Аслă Сталин çапла вĕрентнĕ: «Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсем аллине илсен тата вĕсем ăна вĕçне çитиех хÿтĕлесе тăрсан, мир сыхланса юлĕ тата тĕреклĕнĕ». Сталинăн аслă сăмахĕсене халăхсем пĕтĕм чунтан йышăнса пачĕç, çав сăмахсем ырă кăмăллă мĕнпур çынсен чĕрисенче мир ĕçне хÿтĕлесе тăрас, çĕнĕ вăрçă пуçаракансене çавăрлăхлас çирĕп кăмăла чĕртсе çирĕплетрĕç. И. В. Сталин ятне асра тытса, мире юратакан халăхсем Сталин мире сыхласа хăварма тата тĕреклетме хушнисене пурнăçа кĕртме тупа тăваççĕ.

Миршĕн çунакан халăхсем хăйсен ревчĕсене мире юратакан аслă Совет çĕршывĕ тавра тачăрах та тачăрах пĕтĕçтереççĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе халăхсем питех те пысăк çĕнтерÿ турĕç—тĕнче историйĕнче пирвайхи хут мирпе демократин тата социализмăн хăватлă лагерьне туса çирĕплетрĕç. Мире юратакан государствăсен лагерĕнче халĕ 800 миллион çын шутланать.

Пирĕн чи таса тивĕç çакăнта пулать: мирпе демократи тата социализм лагерьне сыхласа усрас тĕреклетсе пымалла, демократи лагерĕнчи çĕршывсенчи халăхсен туслăхĕпе пĕтĕçÿллĕхне çирĕплетсе пымалла. Пирĕн Совет Союзĕпе аслă Китай халăхĕ хушшинчи, Совет Союзĕпе халăх демократиллĕ çĕршывсенчи мĕнпур ĕçсыннисем хушшинчи ĕмĕрлĕхе пыракан тăванла çирĕп туслăха пур майсемпе те тĕреклетмелле. Пролетариллĕ интернационализм ялавне, Ленин—Сталин ялавне тÿррĕн çĕклесе пырса, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе халăхсем малашне те капитализмла тата колониллĕ çĕршывсенчи мир ĕçĕшĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешекен ĕçсыннисемпе тытакан туслă сыхăнусене çине тăрса тĕреклетсе тата аталантарса пырĕç.

Хăйсен пĕтĕм вăйне коммунизмла общество туса çитерес ĕçе парса, совет çыннисем Совет Союзĕн тăшманĕсен, мирпе демократи тăшманĕсен ирсĕр ĕçĕсемпе ултавĕсене тимлĕн сăнаса тăраççĕ. Совет çыннисем çакна пĕлсе тăраççĕ: пирĕн социализмла государствăн хăвачĕ кăна, халăхсем хушшинчи мирпе демократи лагерĕн вăйĕ кăна, ирĕклĕхе юратакан халăхсен питех те вăйлă революциллĕ сыхăлăхĕ кăна империализмла агрессорсен ирсĕр шухăшĕсене путлантарма, мире сыхласа хăварма пултарать.

Çавăнпа та совет халăхĕ хамăрăн социализмла аслă государствăна пур майсемпе те тата ывăнма пĕлмесĕр малалла çирĕплетсе пырассине, Совет çĕршывĕн хăватлă Хĕçпăшаллă Вăйĕсене, хамăрăн совет разведкине тĕреклетсе пырассине хăйĕн чи таса тивĕçĕ тесе шутлать. Пирĕн çĕршыва нимĕнле агрессор та кĕтмен çĕртен килсе кĕреймĕ. Совет халăхĕ тăшман кирек епле тапăннине те аркатса тăкмаллăх отпор пама хатĕр тăрать.

Хăйĕн иксĕлми вăйĕсене çирĕппĕн шанса тăрса, пирĕн халăх коммунизм пĕтĕмĕшпех çĕнтересси патне пырать. Унăн çулне марксизм-ленинизмăн пурне те çĕнтерекен вĕрентĕвĕ çутатса тăрать. Коммунизмăн çĕнĕ мухтавлă çĕнтерĕвĕсем патне, пĕтĕм тĕнчере мир çĕнтересси патне пирĕн халăха Ленинпа Сталин вĕрентсе çитĕнтернĕ, кĕрешÿсенче пиçĕхнĕ пĕрлĕхлĕ парти—Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ ертсе пырать.

(«ПРАВДА» хаçатăн мартăн 12-мĕшĕнчи умстатьи).

Иосиф Виссарионович Сталина асăнса

Аслă Сталина пĕтĕм çĕршыв юлашки çула ăсатрĕ

Пирĕн вĕçĕмсĕр анлă Тăван çĕршывăн мĕнпур хулисемпе ялĕсенче—промышленность предприятийĕсенче, колхозсенче, учреждениcенче, шкулсенче Иосиф Виссарионович Сталина асăнса хурлăхлă пухусемпе митингсем пулса иртрĕç. Рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем аслă çулпуçпа тата учительпе сывпуллашса пирĕн çĕршывра коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тупа турĕç.

Саратовра çĕр пин ытла ĕçсынни хаклă та юратнă Сталин юлташăн таса ятне хисеплеме, Коммунистсен партине, унăн Центральнăй Комитетне, тăванла Совет Правительствине парăнса тăни çинчен калама Революци площадьне пухăннă. Хăватлă репродукторсем Мускавра, Хĕрлĕ площадьре, хурлăхлă митинг пуçланни çинчен пĕлтереççĕ. Ĕçсыннисем ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕн тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕн Г. М. Маленков юлташăн сăмахне, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕсен Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсен сăмахĕсене чĕререн итлеççĕ.

Мускаври хурлăхлă митинг çинчен радио тăрăх панине Пенза хулинче Центральнăй площаде пухăннă вуншар пин çын, Саранск хулинче Советски площаде пухăнса 40 пин çын, Башкирипе Грозный нефтяникĕсем, Астрахань речникĕсем пиншерĕн, Хусанти тата çĕршывăн ытти хулисемпе ялĕсенчи ĕçсыннисем пиншерĕн итленĕ.

Аслă Сталина юлашки çула ăсатса, совет çыннисем юратнă Тăван çĕршывăн хăватне малалла тĕреклетессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме, Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçме, пирĕн нумай нациллĕ çĕршыври халăхсем хушшинчи туслăха тĕреклетме тупа тăваççĕ.

Кривой Рогри Карл Либкнехт ячĕпе тăракан рудникре ĕçлекен горняксен хурлăхлă митингĕнче бурильщик Иван Макаренко çапла каланă:

— Эпир Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне тата Совет Правительствине хамăр вĕçĕмсĕр парăнса тата шанса тăни çинчен калатпăр. Йывăр, виçесĕр йывăр пирĕн çухату, анчах эпир малалла шанчăклăн пăхатпăр, мĕншĕн тесен Сталин юлташăн ĕçĕ шанчăклă аллăра пулнине пĕлетпĕр. Пирĕн çĕршывра коммунизм çĕнтерни аслă Сталин валли ĕмĕрлĕхе лартнă памятник пулать.

Хамăр вăйсене темиçе хут ÿстерсе ĕçлесси çинчен, Ленинпа Сталинăн вилĕмсĕр ĕçĕсене тĕрĕс туса пырасси çинчен, сыхăлăха ÿстересси çинчен—çаксем çинчен каланă Курск, Ворошиловград, Запорожье, Херсон, Смоленск, Орел тата ытти нумай хуласенчи ĕçсыннисем хурлăхлă митингсемпе пухусенче.

Совхозсенче, колхозсенче, машина-трактор станцисенче пулса иртнĕ митингсенче ĕçхресченĕсем социализмлă çĕрĕçне малалла вăйлатса пырассишĕн, Сталин хушса хăварнисене пурнăçлассишĕн кĕрешме хатĕр тăни çинчен каланă.

Калуга, Саранск, Ижевск хулисенчи тĕп площадьсенче аслă Сталин монуменчĕсене туса лартнă. Çак хуласенчи ĕçсыннисем аслă çулпуçне И. В. Сталин юлташа чĕререн юратса, монументсен умне пиншер чечек кăшăлĕсем хунă.

Мускав хулинчи Сталински районта

Ахаль чухне Сталински районĕнчи урамсенче яланах пысăк хула шавĕ илтĕнсе тăрать. Çак кунсенче районти урамсенче шăпах. Мартăн 9-мĕшĕнче Журавлев площадьне çĕршер çын пухăннă.

...Радио тăрăх Хĕрлĕ площадьри хурлăхлă митинг çинчен пĕлтерсе тăраççĕ. Аслă Сталинпа сывпуллашса артиллерирен персе салют пани илтĕнет. Çав вăхăтрах заводсем, фабрикăсем, пăравуссем хурлăхлăн кăшкăртаççĕ. Площаде пухăннă çынсем çарапуçăн пуç тайса тăраççĕ, вĕсем вĕçĕмсĕр юратнă, хаклă çулпуçăмăрпа учителĕмĕре Иосиф Виссарионович Сталина юлашки çула ăсатаççĕ.

...Мускаври В. В. Куйбышев ячĕпе тăракан трансформатор завочĕн коллективĕ хурлăхлă митинга сборочнăй цехăн питĕ пысăк суртне пухăннă. Ватă рабочисем те, çамрăккисем те сăмах тухса калаççĕ. Вĕсен сăмахĕсенче пурте вĕçĕмсĕр хурланни палăрса тăрать. Çав вăхăтрах хурлăхлă митингра калакан рабочисен сăмахĕсенче хамăр вăйсем çине шанса тăни, Коммунистсен партийĕпе Совет Правительствине вĕçĕмсĕр юратса шанса тăни палăрать.

— Сталин идейисем пирĕн коммунизм патне çитмелли çула хĕвел пек çутатса тăчĕç, халĕ те çутатса тăраççĕ,—тесе калать стахановец В. Овчинников.—Пирĕн пĕтĕм пурнăç, пирĕн пĕтĕм ĕç Сталин юлташ ячĕпе тачă çыхăнса тăрать. Ĕç тухăçлăхне куллен-кун ÿстерсе хамăрăн Тăван çĕршыв хăватне тĕреклетсе пырăпăр.

— Маленков юлташ Хĕрлĕ площадьре каланă сăмах пире шанчăклăн ĕçлесе пурăнма хăват парать,—тесе калать заводри главнăй конструктор В. Митрофанов.—Парти пире коммунизм строительствин сталинла программине пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăй-хăватпа ĕçлесе пыма чĕнет. Çак программăна пурнăçлас тесе эпир вăя шеллемесĕр ĕçлĕпĕр.

Митингра КПСС Центральнăй Комитетне тата ССР Союзĕн Министрĕсен Советне çыру яма йышăннă. Çак çырура завод коллективĕ тата пысăкрах хăватпа ĕçлеме, коммунизмăн аслă стройкисене валли оборудовани туса памалли çулталăкри плана срокчен тултарма сăмах панă.

Завод коллективĕ ССР Союзĕн Верховнăй Советĕнчен тата ĕçсынни депутачĕсен Мускав область Советĕнчен çапла ыйтнă: Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчен ССР Союзĕн Верховнăй Советне тата ĕçсынни депутачĕсен Мускав область Советне депутата суйланă Иосиф Виссарионович Сталина ĕмĕрлĕхех хисеплĕ депутат пулса тăма хăвармалла.

Районти ытти предприятисен коллективĕсем те çавăн пек ыйту яна.

Сталински районĕнчи ĕçсыннисем, партипе правительство чĕнни çине ответлесе, вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Машиностроительсемпе текстильщиксем планран ирттерсе продукци туса кăлараççĕ.

(ТАСС).

ХĔРЛĔ ПЛОЩАДЬРЕ

Мартăн 10-мĕшĕнче ĕçсыннисем иртен пуçласа тĕттĕм пуличченех Хĕрлĕ площаде пырса тăнă. Вилĕмсĕр Ленинпа Сталин ячĕсене çырса хунă Мавзолей умĕнчен вĕсем вăраххăн утса иртнĕ. Мавзолей умĕнчен иртсе пыраканcем хушшинче Мускаври ĕçсыннисем те, пирĕн Тăван çĕршывăн мĕнпур кĕтесĕсенчен килнĕ çынсем те, урăх çĕршывсенчен килнĕ çынсем те нумай.

Иосиф Виссарионович тупăкĕ çине хума илсе килнĕ чечек кăшăлĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр нумай. Халĕ чечек кăшăлĕсене Хĕрлĕ площаде илсе килнĕ. Вĕсене Мавзолей тавра, трибунăсем çине хунă. Чечек кăшăлĕсене Кремль стени тăрăх Спасски башньăран пуçласа Никольски башня патне çитиччен хурса тухнă.

Çак чечек кăшăлĕсене пирĕнтен уйрăлса кайнă аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕре вĕçĕмсĕр юратса тунă. Мускав облаçĕнчи Ногинск хулинчи çип фабрикинче ĕçлекен работницăсем хăйсен чечек кăшăлне тĕрлĕ тĕслĕ пурçăн çиппсемпе илемлетнĕ. Грузи тата Вăтам Ази республикисенчи ĕçсыннисем чечек кăшăлĕсене тутлă шăршă саракан розăсемпе çыхса тунă. Вĕсем Хура тинĕс тăрăхĕнчи халăхсем лаврпа мимозăран тунă тата сурçĕрти ĕçсыннисем чăрăш турачĕсенчен тунă чечек кăшăлĕсемпе юнашар выртаççĕ. (ТАСС)

В. М. Молотов Турци Республикин правительство делегацине йышăнни

Мартăн 11-мĕшĕнче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталина пытарма килнĕ Турци Республикин правительство делегацине—Турцин ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Генеральнăй Секретарьне Д. Ачикалына, 3-мĕш арми командующине корпус генералне Ф. Менгюча тата президентăн главнăй адъютантне подполковник Н. Алькартала йышăннă.

Д. Ачикалын Турци Правительстви ячĕпе Совет Правительствине И. В. Сталин вилнĕ пирки хурланни çинчен пĕлтернĕ.

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Заместителĕ Г. М. Пушкин тата Турцин Совет Союзĕнчи Посолĕ Ф. Хозар пулнă.

В. М. Молотов Финлянди Министрĕсен Совечĕн Председательне тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне У. Кекконена йышăнни

Мартăн 11-мĕшĕнче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов Мускава СССР Министрĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталина пытарма килнĕ Финлянди республикин делегацийĕн пуçлăхне—Финлянди Министрĕсен Совечĕн Председательне тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне У. Кекконена йышăннă.

У. Кекконен Финлянди Президенчĕ тата Правительстви ячĕпе Совет Правительствине И. В. Сталин вилнĕ пирки хурланни çинчен каласа пĕлтернĕ.

Йышăнура Совет Союзĕн Финляндири посланникĕ В. З. Лебедев тата Финляндин Совет Союзĕнчи посланникĕ К. Сундстрем пулнă.

В. М. Молотов Афганистан делегацине йышăнни

Мартăн 11-мĕшĕнче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталина пытарма килнĕ Афганистан королĕн представительне—Мухаммед Дауд хан принца тата Афганистан правительствин представительне—Афганистан Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн пĕрремĕш Заместительне Абдул Гамид хан Азиза йышăннă.

Мухаммед Дауд хан Афганистан королĕ тата правительстви ячĕпе Совет Правительствине И. В. Сталин вилнĕ пирки хурланни çинчен каланă.

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Заместителĕ Г. М. Пушкин пулнă.

Иосиф Виссарионович Сталина асăнса

Хамăр çĕршывра коммунизм туса çитерессишĕн

ЛЕНИНГРАД, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер пирĕн Тăван çĕршыв столицинчи — Мускаври тата пĕтĕм Совет çĕршывĕнчи ĕçсыннисемпе пĕрле Ленинград çыннисем аслă учителĕмĕрпе тусăмăра Иосиф Виссарионович Сталина юлашки çула ăсатрĕç.

Аслă Октябрь мухтавĕпе чапа тухнă Дворцовăй площадьре, Смольнăй çывăхĕнче, Нарва хапхисем патĕнче, Петроградски сторонăра Ленинград çыннисем радио тăрăх ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕн тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕн Г. М. Маленков юлташăн, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕсен Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсен сăмахĕсене тимлĕн итлерĕç.

Кăнтăрла 12 сехет. Нева тĕлĕнче артиллери залпĕнчен сывлăш чĕтресе илет. Сывлăша çĕнĕ те çĕнĕ залпсем кисрентереççĕ. Заводсемпе фабрикăсем хурлăхлăн кăшкăртни илсĕте илтĕнет. Заводсенче станоксем ĕçлеме чарăнаççĕ, урамра транспорт çӳреме чарăнать, çынсем çĕлĕкĕсене хывса хурлăхлăн ним шарламасăр тăраççĕ.

Çĕршыв умне килсе тухнă хурлăх пысăк. Анчах совет çыннисен, коммунизм тăвакан çынсен шухăш-кăмăлĕ çирĕп.

Ленинградри мĕнпур предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче ĕнер Иосиф Виссарионович Сталина асăнса хурлăхлă митингсем пулнă. Çак митингсенче ĕçсыннисем Коммунистсен партине, Совет Правительствине чĕререн парăнса тăни çинчен, хамăр çĕршывра коммунизм тăвассишĕн кĕрешме пĕтĕм вăй-хăвата пама хатĕр тăни çинчен шантарса калаççĕ.

С. М. Киров ячĕпе тăракан заводри мартен цехĕнче ĕçлекен ватă путиловец Д. И. Вишневский митингра çапла каланă:

— Ĕçпе пурăнакан çынсемшĕн аслă Сталин атте пек тăрăшнине эпир кашнинех туйса тăратпăр. Юратнă тăван çулпуçăмăр халĕ ĕнтĕ пирĕн хушăмăрта çук. Анчах Ленин—Сталин ялавĕ çӳлте ялкăшать, партипе совет халăхĕн пĕрлĕхĕ çирĕп. Эпир нихçанхинчен те ытларах пĕтĕçнĕ. Партипе государство руководствинче Сталин юлташăн шанчăклă соратникĕсем тăраççĕ. Ленинпа Сталин ĕçĕ ĕмĕр пурăнĕ, мĕншĕн тесен пирĕнпе пĕрле Коммунистсен партийĕ. Вăл пире Сталин çулĕпе илсе пырать.

...Мускавра Хĕрлĕ площадьре Совет Союзĕн Государство гимнĕн хăватлă сасси кĕрлесе каять. Каллех станоксемпе машинăсем ĕçлеме пуçлаççĕ. Сборочнăй стендсенче ĕç вĕреме пуçлать. Конструкторсем ĕçе тытăнчĕç. Профессорсем кафедрăсем умне лекцисем вулама тухрĕç. Ленинград çыннисем пĕр шухăшпа пурăнаççĕ: Сталин юлташ вĕрентнĕ пек, партин Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви чĕннĕ пек хамăр вăйсене темиçе хут ӳстерсе ĕçлемелле.

Хăйсен речĕсене тачăрах пĕтĕçтерсе, Ленин—Сталин партийĕпе унăн Центральнăй Комитечĕ тавра тачăрах пĕтĕçсе, Ленинград çыннисем пирĕн çĕршывра коммунизм туса çитерессишĕн кĕрешеççĕ.

Халăхсен туслăхне çирĕплетсе пырар!

БАКУ, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Советлă Азербайджан столицинче ĕнер хурлăхлă пулнă. Вуншар пин çын, «Сталин площадĕнчи репродукторсем патне пухăнса, Мускаври Хĕрлĕ площадьре пулнă хурлăхлă митинг çинчен радио тăрăх панине — Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсен сăмахĕсене шăппăн итлесе тăнă.

Йĕри-тавра шăп тăнă вăхăтра артиллерирен персе салют пани илтĕнсе кайнă. Заводсемпе фабрикăсен, карапсен тата пăравуссен гудокĕсем темиçе минут хушши чарăнмасăр кăшкăртса тăнă. Азербайджан столици пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен юратнă çулпуçне Иосиф Виссарионович Сталина юлашки çула ăсатнă.

Бакури предприятисемпе учрежденисенче хурлăхлă митингсем пулса иртнĕ.

Ленински районĕнчи 10-мĕш промысла. Çак промыслана Совет çĕршывĕн нефть промышленноçне вăйлатмалли сталинла план тăрăх ытти промыслăсенчен малтан туса ĕçе янă. Кунта хурлăхлă митингра чи ватă нефтяник, оператор Гасан Амрах сăмах тухса каланă.

— Пирĕншĕн калама çук пысăк хурлăх пулчĕ,—тесе каланă вăл.—Эпир хаклă Сталин юлташа юлашки çула ăсатрăмăр. Анчах аслă Сталин ĕçĕ пурăнать, вăл ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ. Ленинăн шанчăклă ученикĕ тата Сталин соратникĕ Маленков юлташ, пĕтĕм халăх шухăш-кăмăлне палăртса каларĕ. Вăл каланă сăмах—пирĕн пĕтĕм çĕршыв Сталин тупăкĕ умĕнче тупа туни пулса тăрать. Ленин—Сталин партийĕ, партин Центральнăй Комитечĕ ертсе пынипе эпир коммунизм çулĕпе çирĕппĕн малалла утатпăр.

Çак хурлăхлă кун «Бакинский рабочий» заводри литейщик Наджаф Махмуд Азербайджан халăхĕн шухăш-кăмăлне палăртнă. Вăл çапла каланă:

— Сталин пирĕн халăхшăн тăрăшса, ăна хĕвел пекех ăшăтрĕ. Халăхсен сталинла çемйинче пирĕн Азербайджан чечекленсе ӳсрĕ. Эпир Сталин хушса хăварнине сыхласа усрăпăр, халăхсен туслăхне çирĕплетсе пырăпăр. Халăхсен çак туслăхĕ пур чухне пирĕншĕн тулашри тăшмансем те, шалти тăшмансем те хăрушă мар. Сыхă пулăпăр, хамăрăн Тăван çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетсе пырăпăр. Пирĕн тăшмансем çакна пĕлсе тăччăр: совет халăхĕ Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçет. Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, аслă Сталинăн шанчăклă соратникĕсем çул кăтартса пынипе совет халăхĕ хамăр çĕршывра коммунизм туса çитерет.

Бакури ĕçсыннисен хурлăхлă митингĕсем Азербайджан халăхĕ хамăр çĕршыври мĕнпур халăхсемпе пĕрлĕхлĕ пулнине, Азербайджан халăхĕ Коммунистсен аслă партине чунтан-чĕререн шанса тăнине, коммунизм строительствинче çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвассишĕн кĕрешме хатĕррине кăтартса пачĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕТНЕ ССР СОЮЗĔН МИНИСТРĔСЕН СОВЕТНЕ СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМНЕ

Шупашкар хула Совечĕн пĕрремĕш сессине пухăннă депутатсем Ленинăн соратникĕ тата унăн ĕçне малалла генилле туса пыракан, социализмлă революцин аслă стратегĕ, Совет государствин руководителĕ, Коммунистсен партийĕн, совет халăхĕн тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕпе учителĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилнĕ пирки хулари мĕнпур ĕçсыннисем чунтан-чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Аслă Сталинăн пĕтĕм пурнăçĕпе ĕçĕсем Ленин ĕçĕсемпе, Коммунистсен партийĕпе Совет государствин историйĕпе, пĕтĕм тĕнчери рабочисен движенийĕпе тата колониллĕ халăхсен империализм пусмăрне хирĕç нациллĕ ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕвĕпе, прогрессивлă пĕтĕм этемлĕх нумай вăхăта пыракан çирĕп миршĕн тата халăхсен хăрушсăрлăхĕшĕн кĕрешнипе тачă çыхăнса тăраççĕ.

Ленинпа пĕрле Сталин юлташ Коммунистсен хăватлă партине тунă, ăна вĕрентсе пиçĕхтернĕ, Ленинпа пĕрле Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революцие хатĕрленĕ тата организациленĕ, тĕнчери советлă пĕрремĕш государство туса хунă.

Ленинăн вилĕмсĕр ĕçне малалла туса пырса, Сталин юлташ совет халăхне пирĕн çĕршывăн пĕтĕм тĕнчипе паллă историллĕ çĕнтерĕвĕ патне, социализм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерчĕ. Пирĕн ĕмĕрти аслă полководец Сталин юлташ ăслă та çирĕп ертсе пынипе паттăр совет халăхĕ Тăван çĕршывăн ирĕклĕхне, чысне тата никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварчĕ, иккĕмĕш тĕнче вăрçинче фашизма çĕнтерчĕ.

Сталин юлташ партие тата пĕтĕм халăха ССР Союзĕнче коммунизм тумалли аслă та уçăмлă программăпа хĕçпăшаллантарчĕ.

Коммунизм ĕçне чунтан-чĕререн туса пынă, уншăн хăйĕн пĕтĕм пурнăçне панă Сталин юлташ вилнĕ пирки Шупашкар хулинчи ĕçсыннисен чĕрисем хытă ыратаççĕ. Сталин юлташăн вилĕмсĕр ячĕ пирĕн хулари ĕçсыннисен чĕринче ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ.

Ленинпа пĕрле Сталин юлташ Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикине туса хучĕ тата чăваш халăхĕшĕн яланах тăван атте пек, ывăнма пĕлмесĕр тăрăшрĕ. Совет халăхĕсен тăванла çемйинче чăваш халăхĕ политика, хуçалăх тата культура енĕпе нихçанхинчен вăйлăрах чечекленчĕ.

Чăваш халăхĕ, пирĕн аслă Тăван çĕршыври мĕнпур халăхсем пекех, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ, вилĕмсĕр Сталин тăрăшнипе ирĕклĕх тата никама пăхăнманлăх илчĕ, пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Чăваш халăхĕ хăйĕн тăван ашшĕне, учительне тата тусне ĕмĕр-ĕмĕр чĕререн тав туса пурăнĕ.

Эпир, ĕçсыни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсем, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕн, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн пĕрлехи ларăвĕ çĕршывăн пĕтĕм пурнăçне нимĕнле чăрмавсăр тата тĕрĕс ертсе пымалла тăвас тĕллĕпе питех те кирлĕ решенисем йышăнасси çинчен кăларнă постановление пĕр шухăшлă пулса ырлатпăр.

Эпир, Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсем, Аслă Сталин хушса хăварнисене пурнăçлас ĕçе чунтан-чĕререн парăнса, депутат мĕнле пулмалли çинчен Сталин вĕрентсе каланисене чĕрере асра тытма тата пурнăçласа пыма тупа тăватпăр. Эпир çапла сăмах паратпăр: эпир хамăрăн задачăсен çӳлĕшĕнче тăрăпăр, ленинла-сталинла сăнарлă политикăллă деятельсем пулăпăр, Ленинпа Сталин пекех кĕрешӳре нимрен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çынсем пулăпăр, кирек мĕнле хăраса ӳкесрен те, кирек мĕнле хăраса ӳкес пеккинчен те Ленинпа Сталин пекех ирĕклĕ пулăпăр, пысăк ыйтусене татса панă чухне, пур енлĕ ориентаци кирлĕ чухне, пĕтĕм плюссемпе минуссене пур енчен те шута илмелле çĕрте Ленинпа Сталин пекех ĕçе васкамасăр тăвакансем пулăпăр, Ленинпа Сталин пекех тĕрĕс те тӳрĕ кăмăллă пулăпăр, хамăр халăха Ленинпа Сталин юратнă пекех юратăпăр. Халăхсен сталинла туслăхне сыхласа усрама, Совет государствин оборона пултарулăхне ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетсе пыма, политикăллă сыхăлăха пур майсемпе те вăйлатма, хамăр ретсене Ленин — Сталин партийĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕ тата Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçтерме, хамăр çĕршывра коммунизм тăвас аслă ĕçе пурнăçлама пĕтĕм вăй-хала тата творчествăллă хастарлăха мобилизацилеме тупа тăватпăр.

Сывă пултăр Марксăн—Энгельсăн — Ленинăн — Сталинăн пурне те çĕнтерекен аслă вĕрентĕвĕ!

Сывă пултăр пирĕн социализмлă хăватлă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—паттăр совет халăхĕн çапăçусенче пиçĕхнĕ авангарчĕ, пирĕн ĕмĕрĕн ăсĕ, чысĕ тата совеçĕ!

Сывă пулччăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе пирĕн тăван Совет Правительстви!

ĔÇСЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ПĔРРЕМĔШ СЕССИЙĔ.

Пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле

Мускав. Сталин ячĕпе тăракан автозавод. Репродукторсем Хĕрлĕ площадьрен хурлăхлă кĕвĕ илсе килеççĕ. Автозаводра ĕçлекенсем аслă Сталинăн ученикĕсемпе çывăх соратникĕсен—Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсен сăмахĕсене итлеççĕ.

Мартăн 9-мĕшĕнчи кăнтăрлахи 12 сехет. Хурлăхлă минут. Конвейерсемпе станоксем ĕçлеме чарăнаççĕ. Завод гудокĕ хурлăхлăн кăшкăртать. Автозаводра ĕçлекенсем, çĕршыври ытти мĕнпур ĕçсыннисем пекех, юратнă çулпуçăмăрпа сывпуллашаççĕ...

Кăсхине пиншер рабочисем, инженерсем, техниксем, служащисем завод площачне пухăнаççĕ. Партком секретарĕ Жеребин юлташ хурлăхлă митинга уçать.

— Эпир Иосиф Виссарионович Сталина пысăк хурлăхпа юлашки çула ăсатрăмăр,—тет тимĕрçĕ цехĕнче ĕçлекен аслă мастер Хромилин юлташ.—Ленинпа Сталин ялавне Сталин юлташăн шанчăклă ученикĕсемпе çывăх соратникĕсем хăйсен аллине илчĕç. Çак çĕнтерӳллĕ ялавпа эпир шанчăклăн коммунизм çĕнтерĕвĕ патне пыратпăр.

Стахановка Евсеева сăмах илет. Вăл çапла калать:

— Пире, совет хĕрарăмĕсене, Иосиф Виссарионович Сталин ячĕ уйрăмах питĕ хаклă. Вăл, аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр, хĕрарăмсем валли ĕçлеме, вĕренме, государство ĕçĕсене хутшăнма анлă та çутă çул уçса пачĕ. Тата лайăхрах, пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тупа тăвар. Çак хурлăхлă кунсенче Коммунистсен партийĕн ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕпе пирĕн тăван Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçер.

Митинга пухăннисен шухăшĕсемпе туйăмĕсене палăртса, автозавод çыннисем Ленинпа Сталинăн аслă ĕçне туса пыма хатĕр тăни çинчен калаççĕ ораторсем.

Хурлăхлă митинга пухăннисем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Советне çыру яма йышăнаççĕ. Автозаводецсем пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн, Советлă социализмлă государство хăватне тĕреклетессишĕн, хамăр çĕршывра коммунизм обществи тăвассишĕн кĕрешме пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме шантарса калаççĕ.

Вăя шеллемесĕр тăрăшса ĕçлер!

ЮЖНО-САХАЛИНСК, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Сахалин утравĕ çинчи промышленность предприятийĕсенче, пулă промыслисенче тата колхозсенче, Хĕрлĕ площадьри хурлăхлă митинг çинчен радио тăрăх панине итленĕ хыççăн, ĕçсыннисен хурлăхлă пухăвĕсем пулса иртнĕ. Поляковски пулă заводĕнче ĕçлекен Хохлов юлташ çапла каланă:

— Пысăк хурлăх килсе тухнă кунсенче эпир партин ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕ тавра, Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçетпĕр. Аслă Сталинăн шанчăклă соратникĕсем Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем калани совет çыннисене малашне хастарлă ĕçлеме çĕнĕ вăй параççĕ. Сахалинри ĕçсыннисем аслă Сталин идейисене пурнăçлас тесе вăя шеллемесĕр ĕçлесе пырĕç!

Рабочисемпе колхозниксем Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн пĕтĕм вăй-хăватпа тăрăшса ĕçлеме пулнă. Вĕсен сăмахĕ пурнăçланса пырать. Углегорскри шахтăра пĕрремĕш сменăра ĕçлекен горняксем паян пурте ĕç нормине иртсерсе тултарнă. Пулăçсем, вăрман касакансем, хут промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисем производство заданине тăтăшах иртсерсе тултараççĕ.

Аслă çулпуç çуралнă хулара

ГОРИ, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта, пĕчĕк çуртра, халĕ халăхшăн чи таса вырăн пулса тăнă вырăнта, Иосиф Виссарионович çуралса ӳснĕ... Халĕ, акă, хура хăюпа тыттарнă хĕрлĕ ялавсене тайăлтарнă, хурлăхлă кĕвĕсем илтĕнеççĕ... Халăх хурлăхĕ пысăк.

Историллĕ çурт патне çынсем вĕçĕмсĕр пырса тăраççĕ. Кунта Мускавран, Донбасран, Харьковран, Ростовран, çĕршыври тата ытти хуласенчен пиншер çын килсе курнă. Аслă çулпуçăн сăпки ларнă çак çурта çынсем хумханса кĕреççĕ.

«Совет халăхĕпе пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх умне тухса тăнă йывăр çухату çинчен калама сăмахсем çитмеççĕ,—тесе çырнă Мускав рабочийĕ Иван Икахомов.—Аслă генийĕн, пирĕн мĕнпур çĕнтерӳсене тăваканĕн, хĕрӳллĕ юратнă тата хаклă учителĕн—Иосиф Виссарионович Сталинăн чĕри тапма чарăнчĕ. Анчах Сталин ячĕ вилĕмсĕр. Вăл пирĕн чĕресенче пурăнать. Сталин вăл—мир. Сталин вăл—коммунизм çĕнтерĕвĕ».

«Тупа тăватпăр сана, Сталин юлташ, санăн вилĕмсĕр идейăсене тĕрĕс тытса пыма,—тесе çыраççĕ Гори студенчĕсем,—мухтавлă Коммунистсен партийĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçме тупа тăватпăр».

Гори хулинче паян пулса иртнĕ хурлăхлă митингсенче ĕçсыннисем Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн тата ытларах тăрăшса ĕçлеме, сыхăлăха пĕрмай ӳстерсе пыма, Сталин хушса хăварнисене тата партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисене пурнăçлама тупа туса каларĕç.

Гори хулинчи пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекенсен хурлăхлă митингĕнче стахановка М. Сахвадзе сăмах тухса каланă.

— Пирĕн Тăван Сталин текех пирĕнпе çуккине ĕненме йывăр,—тенĕ вăл.—Анчах пире Ленинпа Сталин пăхса ӳстернĕ Коммунистсен партийĕ ертсе пырать. Партин Центральнăй Комитечĕ тата Совет Правительстви ĕçсыннисене хăйсен мĕнпур вăйĕпе творчествăллă пултарулăхне хамăр çĕршывра коммунизм тăвас аслă ĕçе пама чĕнеççĕ. Хамăрăн паттăр ĕçпе социализмлă аслă Тăван çĕршывăн хăватне тата ытларах тĕреклетер.

КПСС Центральнăй Комитетне яма йышăннă телеграммăра комбинат коллективĕ сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме сăмах панă.

Хурлăхлă митингсем Гори хулинчи мĕнпур предприятисенче, çĕнĕ стройкăсенче тата учрежденисенче пулса иртнĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин вилнĕ пирки ют çĕршыв государствисен парламенчĕсем хурланса пĕлтерни

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин вилнĕ пирки СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ ячĕпе çаксенчен хурланса пĕлтернисем килнĕ: Чехословаки Республикин Наци Пухăвĕнчен, Демократиллĕ Германи Республикин Халăх Палатинчен, Монголи Халăх Республикин Аслă Халăх Хуралĕнчен, Демократиллĕ Вьетнам Республикин Наци Пухăвĕнчен, Инди Халăх Палатинчен, Финлянди Сеймĕнчен, Норвеги Парламенчĕн Президиумĕнчен, Итали Республикин Депутатсен Палатинчен, Итали Республикин Сенатĕнчен, Люксембург Парламентĕнчен. (ТАСС).

Сталинла программăна пурнăçа кĕртер!

МИНСК, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Белорусси столицин центрти площадĕнче Иосиф Виссарионович Сталин монуменчĕ кĕрнеклĕн курăнса ларать.

Мартăн 9-мĕшĕнче площаде вуншар пин ĕçсыннисем пухăнчĕç. Вĕсем, шăп тăрса, Мускаври хурлăхлă митингра Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем каланă сăмахсене радиопа итлерĕç.

Кăнтăрлахи 12 сехет. Артиллери салючĕн сассисем кĕрлеççĕ. Минскра, Белоруссире, социализмлă пĕтĕм Тăван çĕршывра пилĕк минутлăха пурнăç чарăнчĕ.

Ĕç кунĕ вĕçленнĕ хыççăн Минскри предприятисенче, учрежденисенче тата шкулсенче асран кайми Иосиф Виссарионович Сталина асăнса иртернĕ массăллă хурлăхлă митингсем пулчĕç.

Минскри автомобиль заводĕнчи митингра предприятири чи лайăх çынсем тухса каларĕç. Вĕсем рабочисемпе работницăсен ячĕпе Сталин палăртса панă аслă ĕçсене пурнăçлассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеме тупа турĕç.

КПСС Центральнăй Комитетне, СССР Министрĕсен Советне тата СССР Верховнăй Совет Президиумне яма йышăннă çырура завод коллективĕ çапла çырать: коллектив Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн сталинла Центральнăй Комитечĕпе тăван Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçĕ. Эпир ĕçри пуçарулăха ывăнма пĕлмесĕр вăйлатса пыма, хамăр çĕршывра коммунизм тумалли сталинла программăна пурнăçлассишĕн кĕрешес ĕçре хамăр хастарлăха темиçе хут ӳстерме тупа тăватпăр.

Иосиф Виссарионович Сталина асăнса

Ленин—Сталин ялавĕ шанчăклă алăра

Мартăн 9-мĕшĕнче, Мускавра СССР Министрĕсен Совечĕн Председательне, Совет Союзĕнчи Коммунистсен Партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарьне И. В. Сталин Генералиссимуса пытарнă хыççăнах Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ĕçлекенсем хурлăхлă митинга пухăнчĕç.

— Мускав, Тăван çĕршыври ĕççыннисем хаклă çулпуçа, учителĕмĕре тата аттене И. В. Сталина пытарчĕç,—терĕ тĕртекен фабрика заведующийĕ Н. Лобанова юлташ.—Сталин хăйĕн пурнăçне коммунизм обществи туса çитерессишĕн кĕрешсе ирттерчĕ. Пире те хăй пекех ĕçleме, кĕрешме, халăхшăн пурăнма вĕрентрĕ. Халĕ вăл пирĕн хушăмăрта çук. Анчах унăн ĕçне малалла ертсе пыма парти вĕрентсе ÿстернĕ, Сталинăн шанчăклă вĕренекенĕсем, соратникĕсем аллине шанса панă. Ленин—Сталин ялавĕ шанчăклă алăра. Пирĕн çĕршыв тĕнчере чи малта пыракан хăватлă государство. Пирĕн халăх миршĕн, тĕнчипе мир тăвассишĕн кĕрешнĕ, вăл малашне те çавăн пекех пулĕ. Шалти политика тĕлĕшпе пирĕн тĕп ĕç,—терĕ Г. М. Маленков юлташ,—рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, мĕнпур совет çыннисен материальнăй пурнăçне малалла пĕрмаях лайăхлатса пырасси пулать. Халăх ырлăхĕшĕн, унăн материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтересс пырассишĕн тимлĕн тăрăшасси пирĕн партипе правительствăшăн закон пулса тăрать. Çакă вăл аслă Сталин çирĕп тытса пынă политика.

Совет государствин тулашри политики—халăхсем хушшинче мирпе туслăх политики. Мире сыхласа хăварса, çĕнĕ вăрçă чĕртме хатĕрленекенсене хирĕç кĕрешесси. Çакă вăл аслă çулпуç И. В. Сталин тытса пынă политика. Çак политикăна унăн шанчăклă соратникĕсем малашне те çирĕп пурнăçласа пырĕç.

Эпир Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем хаклă çулпуç И. В. Сталин тупăкĕ умĕнче тупа туса каланă сăмахсене пĕтĕм совет халăхĕ калана сăмах вырăнне хурса йышăнатпăр. Совет халăхĕ Коммунистсен партийĕ, Совет Правительстви ертсе пынипе хăйĕн сăмахĕсене тивĕçлипе пурнăçласа пырасси пирки никам та иккĕленме пултараймасть.

Эпир тăван парти, унăн Центральнăй Комитечĕ тата Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕрлешĕпĕр. Ленин—Сталин ялавне малалла коммунизм патне çитиех илсе пырăпăр. Пирĕн пĕр тĕллев—коммунизм. Эпир ун патне çитетпĕрех.

Хамăр Тăван çĕршыв вăй-хăватне ÿстерессишĕн халиччен хинчен икĕ-виçĕ хут лайăхрах ĕçleме пулатпăр.

Митингра çавăн пекех фабрика директорĕ Г. Кулешов, А. Пашков инженер, парторганизаци секретарĕ Н. Бронникова тата ыттисем те сăмах тухса каларĕç. Пурте вĕсем совет çыннисем И. В. Сталин хушса хăварнисене пурнăçлассишĕн ырми-канми кĕрешме хатĕр пулни, Ленин—Сталин ялавĕ шанчăклă алăра пулни çинчен каларĕç.

Митингра пулнисем, пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, партипе Совет Правительствин шалтипе тулашри политикине чĕререн ырланине, Ленин—Сталин ялавĕ шанчăклă алăра пулнине палăртса резолюци йышăнчĕç.

Çак кунсенче фабрикăри агитаторсем Г. М. Маленков, Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсем И. В. Сталин тупăкĕ умĕнче каланă сăмахсем тăрăх калаçусем ирттерессĕ.

Парти ертсе пынипе, малалла, çĕнĕ çĕнтерÿсем патне

КАНАШ, мартăн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Мартăн 9-мĕшĕнче 12 сехетре, Сталин ÿтне пытарнă вăхăтра, хулара вунăшар пăравуспа завод трубисем виçĕ минут хушши хурлăхлăн кăшкăртса, аслă çулпуçа юлашки çула ăсатрĕç. Предприятисемпе учреждениссенче 5 минутлăха ĕçleме чарăнчĕç. Каçхине, ĕç пĕтсен, пур предприятисенче те хурлăхлă митингсем пулса иртрĕç.

Халĕ хулари нумай йышлă агитаторсем цехсенче, хĕрлĕ кĕтессенче, хваттерсенче пулса СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата КПСС Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Г. М. Маленков юлташ тата Л. П. Берияпа В. М. Молотов юлташсем Сталин тупăкĕ умĕнче тупа туса каланă сăмахсене ăнлантарса параççĕ. Ĕççыннисем сăмахпа та, ĕçпе те хăйсем партин Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви тавра тачăрах пĕтĕçнине кăтартаççĕ.

— Эпĕ чугун çул çинче 30 çул ытла машинист пулса ĕçлетĕп,—тет Игнатьев юлташ.—Çак вăхăтра пире яланах Сталин юлташ вĕрентсе, пулăшса, хавхалантарса пычĕ. Çулпуç пирĕнтен ĕмĕрлĕхе уйрăлчĕ. Анчах унăн ĕçĕсем шанăçлă алăра. Сталин кăтартса панисене малашне те пĕр пăркаланмасăр тĕрĕс пурнăçласа пырассине КПСС Центральнăй Комитечĕн пленумĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕ пĕрле йышăннă постановлени лайăх кăтартса парать. Ленинăн вĕренекенĕ, Сталин юлташăн çывăх соратникĕ Г. М. Маленков юлташ ертсе пынипе эпир пĕр минутлăха чарăнса тăмасăр малалла—коммунизм патне кайăпăр.

— Çак çĕр çинче пире чарса тăма пултаракан вăй çук,—терĕ Г. М. Маленков юлташ Сталин тупăкĕ умĕнче каланă сăмахра. Унăн сăмахĕсем мана вăй хушаççĕ. Сталин юлташ вĕрентнине пурнăçласси пирĕнтен килет. Çавăнпа та эпĕ малашне йывăр тиенĕ составсем кăна илсе çÿресе, грузсем ытларах турттарма, çĕр кăмрăкĕ перекетлеме сăмах паратăп,—тет паллă машинист Казиков комсомолец.

Г. М. Маленков юлташ, Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсен сăмахĕсене моторсем юсакан заводра та тимлĕн сÿтсе яваççĕ.

— Пирĕн партипе правительствăна нумай çулсем хушши Сталин юлташпа пĕрле ĕçлесе вĕреннĕ, хăйсен пултарулăхĕпе шанăçне кăтартса панă юлташсем ертсе пыраççĕ. Çавăнпа эпир партин Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительствине пĕр иккĕленмесĕр шанатпăр. Вĕсем тавра тата тачăрах пĕтĕçсе коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн икĕ хут ытларах вăй хурса кĕрешĕпĕр,—тет моторсем юсакан заводри экономист Соснин юлташ.

(Хамăр корр.).

Эпир лăпкăн та шанчăклăн ĕçleме пултаратпăр

СЕНТЕРВĂРРИ, мартăн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти тата хулари предприятисемпе учреждениссенче, колхозсенче, шкулсенче хурлăхлă митингсем пулса иртрĕç. Çав митингсенче ĕççыннисем аслă çулпуçа И. В. Сталин юлташа пытарнă кун Мускавра пулнă хурлăхлă митингра СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата КПСС Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Г. М. Маленков юлташ тата Л. П. Берия. В. М. Молотов юлташсем каланă сăмахсене чĕререн ырласа йышăнаççĕ.

—Пирĕн хаклă учителĕмĕр, колхозниксен чи юратнă тусĕ тата учителĕ Иосиф Виссарионович Сталин пирĕнтен уйрăлса кайрĕ,—терĕ Молотов ячĕпе тăракан колхозри колхозниксен хурлăхлă митингĕнче парторганизаци секретарĕ П. Михайлов юлташ.—Вăл тăрăшнипе колхозлă ял хресченĕсем пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнакан пулчĕç. Çакăншăн колхозлă ял хресченĕсем аслă çулпуçа ĕмĕр-ĕмĕр чысласа хисеплĕç. Сталин пирĕнтен ĕмĕрлĕхе уйрăлса кайрĕ. Анчах вăл пуçарнă ĕç малалла та хăватлăн пулса пырĕ. Çакна эпир Г. М. Маленков юлташ каланă сăмахран та аван куратпăр. «Пирĕн чи таса тивĕç—Коммунистсен аслă партине малашне те тĕреклетсе пырасси пулать,—терĕ Г. М. Маленков юлташ.—Пирĕн партин вăйĕпе никам çĕнтерейми хăвачĕ—унăн речĕсен пĕрлĕхĕпе пĕтĕçÿлĕхĕнче, ĕçпе ирĕк пĕрлĕхĕнче, парти членĕсем хăйсен ирĕкне парти ирĕкĕпе тата кăмăлĕпе пĕрлештерме пĕлнинче. Пирĕн партин вăйĕпе никам çĕнтерейми хăвачĕ — халăх массисемпе уйрăлми тачă çыхăнса тăнинче». Çак сăмахсем пирĕн юратнă парти малашне те халăх интересĕсене çирĕп пурнăçласа пырассине, вăл халăхăн материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн ырми-канми ĕçлессине кăтартса параççĕ. Халăхпа тачă çыхăннă парти çĕршыва коммунизм патне илсе çитеретех.

Судоверфьре пулнă хурлăхлă митингра паллă стахановец П. Харитонов юлташ сăмах каларĕ.

— Хаклă çулпуçăмăр Сталин юлташ Ленин ялавне çÿлте тытса малалла илсе пычĕ. Вăл çĕршыва çĕнетсе хулăштарчĕ, совет халăхне, пĕтĕм тĕнчери этемлĕхе фашизм пусмăрĕнчен хăтарчĕ. Халĕ, И. В. Сталин вилнĕ хыççăн, Ленин ялавĕ Коммунистсен партийĕпе Совет Правительствин паллă руководителĕсен, Сталин юлташăн шанчăклă соратникĕсен аллине кусрĕ. Çак ялава вĕсем яланах çÿлте тытса совет халăхне çутă малалла—коммунизм патне илсе çитерĕç. Эпир, совет çĕршывĕнчи рабочисем, колхозлă ял хресченĕсем, интеллигенци Совет Правительстви пирĕншĕн тăрăшнине куллен асра тытса, партипе правительство хушнине пурнăçлассишĕн куллен ывăна пĕлмесĕр ĕçлĕпĕр.

Районти ĕççыннисем КПСС Центральнăй Комитечĕн пленумĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕ пĕрле йышăннă постановление чун-чĕререн ырлаççĕ. Партипе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçсе, Тăван çĕршыв ырлăхĕпе мухтавĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешме, политикăллă сисĕмлĕхе ÿстерме пулса резолюцисем йышăнаççĕ.

И. НАМАНГАН.

Çулпуçăн хисеплĕ ячĕ

КУКЕÇ. Кăçалхи февраль уйăхĕнче Мăнпÿкаçсинчи Сталин ячĕпе тăракан тата Автан Çырминчи «4-мĕш пятилетка» ялхуçалăх артелĕсен членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Колхозниксем икĕ артеле пĕр колхоза пĕрлештерме йышăнчĕç.

Пĕрлешсе пысăкланнă колхоза Иосиф Виссарионович Сталин ятне парĕç. Колхоз председателĕ пулма Г. Павлов коммуниста суйларĕç.

Н. МУРАВЬЕВ.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕТНЕ

Италири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн шанчăкла çулпуçĕ Сталин юлташ вилнĕ пирки чунтан-чĕререн хурланни çинчен Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсене пĕлтерет. Эпир Сталинăн вĕрентĕвĕпе ĕçне пула ирĕклĕхшĕн кĕрешес çул çинче татăклă çитĕнÿсем тума пултартăмăр. Рабочи класпа Итали халăхĕ çавна нихçан та манас çук.

Ленинпа пĕрле Сталин юлташ халăха Октябрьти социализмла революци çĕнтерĕвĕ патне илсе çитернĕ, социализмла государствăн никĕсне хывнă, çак государствăна мĕнпур тăшмансенчен хÿтĕленĕ тата тĕреклетнĕ, Совет Союзĕнче социализм тунă, коммунизма куçмалли çула уçса кăтартса панă. Çак аслă çитĕнÿсем çула çутатса пачĕç, пире, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери халăхсене малалла кайма май пачĕç.

Фашистла реакцин йывăр çулĕсенче И. В. Сталин вĕрентĕвĕ, унăн политики социализм тăвас тата ăна хÿтĕлес енĕпе чаплă çитĕнÿсем туни Итали халăхĕшĕн фашизмран, чухăнлăхпа пусмăртан ирĕке тухмалли шанчăк пулса тănă. Ленинпа Сталин ячĕсене асра тытса, Италири пиншер коммунистсемпе антифашистсем тĕрмесенче асаплантарнине чăтăмлăн тÿссе ирттерчĕç, хăйсен кĕрешĕвĕ ахаль пĕтес çуккине ĕненсе тăрса, пурнăçне те шеллемерĕç. Наци ирĕклĕхĕшĕн пынă тĕрĕслĕхлĕ вăрçă вăхăтĕнче Итали халăхĕн чи лайăх ывăлĕсем, пирĕн мухтавлă партизансем, ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсем, аслă Сталинăн вĕрентĕвĕпе тата примерĕпе хавхаланса, захватчиксене Итали çĕрĕ çинчен хăваласа ярас тата тăван çĕршывăн ялавне пылчăк çинчен çĕклес тесе алла хĕçпăшал тытрĕç.

Аслă Сталинăн çутă примерĕ, унăн вĕрентĕвĕпе ĕçĕ çынсене çĕнĕ общество тума çул кăтартса пачĕç. Историре халиччен пулман çак çĕнĕ обществăн никĕсĕ—халăх ирĕклĕхĕ, тĕрĕслĕхпе мир. Чи лайăх пуласлăхĕшĕн, эксплуатациерен тата хăрушлăхран хăтăлассишĕн пыракан кĕрешÿре Итали халăхне аслă Сталинăн вĕрентĕвĕ хавхалантарать, çул кăтартса парать.

Сталин пире çапла вĕрентрĕ: демократиллĕ ирĕклĕхсен, нацин никама пăхăнманлăхĕпе наци суверенитечĕн ялавне, реакциллĕ буржуази аяккалла кăларса ывăтнă ялава, шăпах коммунистсемпе демократсен çĕклемелле тата ăна малалла тытса пымалла. Сталин пире çапла вĕрентрĕ: мире хÿтĕлесси рабочи класпа пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тĕп задачи пулать. Сталин пире çапла вĕрентрĕ: коммунистсен вăйĕ, идеологи, политика тата организаци тĕлĕшĕнчен пĕрлĕхлĕ пулни рабочи класпа пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем умĕнче тăракан историллĕ задачăсене пурнăçламалли тĕп хĕçпăшал пулса тăрать.

Çапла хушса хăварнисене эпир нихăçан пĕтĕмĕшпех пурнăçлăпăр. Эпир çакна çирĕп ĕненетпĕр: никама пăхăнманлăхшăн, ирĕклĕхшĕн тата наци суверенитечĕшĕн пыракан пирĕн кĕрешĕвĕн ăнăçлăхĕ чи малтанах тĕнчере пĕррĕмĕш социализмла государство пуррипчен, Совет Союзĕн никам çĕнеймĕ вăйĕнчен килет.

Эпир хамăрăн партие, унăн пĕрлĕхне тата ытларах çирĕплетĕпĕр, партипе халăх массисем хушшинчи çыхăнава çирĕплетсе, сарса пырăпăр. Эпир яланах пролетарилле интернационализм майлă пулма, Марксăн—Энгельсăн—Ленинăн—Сталинăн никам çĕнтерейми теорине лайăхрах вĕренме, пĕлĕве ÿстерсе пыма пулатпăр.

Совет Союзĕн интересĕсене пĕтĕм тĕнчери мир ĕçĕнчен пачах та уйăрма çуккине çирĕп ĕненсе тăрса, Италири коммунистсем хăйсен обязательствине çĕнĕрен çирĕплетсе калаççĕ: империалистла вăрçă чĕртекенсен аллине, каллех агресси çулĕ çине тăма, Совет Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хирĕç тухма хăякансене кирек кама та чарса лартатпăр. Вăрçă чĕртекен империалистсен тата вĕсен пирĕн çĕршыври тарçисен ĕмĕчĕсем арканса кайĕç. Итали халăхĕ нихçан та Совет Союзĕнчи халăхсене хирĕç, социализм çĕршывне хирĕç, Ленин—Сталин çĕршывне хирĕç вăрçас çук.

Ирĕклĕхшĕн тата этемлĕх прогресĕшĕн пыракан кĕрешÿри çулпуçпа учителĕн—Иосиф Сталин ячĕ ĕмĕр-ĕмĕр пурăнтăр!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ!

Сывă пултăр Итали халăхĕпе Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи çирĕп туслăх!

ИТАЛИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ.

СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛА РЕСПУБЛИКĂСЕН СОЮЗĔН МИНИСТРĔСЕН СОВЕТНЕ

Мускав.

Монголи халăхĕпе Монголи Халăх Республикин Правительстви ячĕпе тата хам ятпа Советлă Социализмлă Республикăсен Правительствине тата аслă совет халăхне СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ, совет халăхĕпе пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен генил лĕ çулпуçĕпе учителĕ, Монголи халăхĕн аслă тусĕпе тăван ашшĕ, эпир юратакан Иосиф Виссарионович Сталин вилсе кайнă пирки чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтеретĕп.

Аратсем — выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем, рабочисем, интеллигентсем тата Монголи Халăх Республикинчи мĕнпур ĕççыннисем Ленинăн вилĕмсĕр ĕçĕсене генилле малалла туса пыракан, Совет Союзĕнчи мухтавлă Коммунистсен партийĕн никĕсне хывнă аслă çын тата унăн çулпуçĕ, коммунизмăн аслă рулевойĕ И. В. Сталин юлташ вилнĕ пирки тăванла совет халăхĕпе тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланаççĕ. И. В. Сталин ертсе пынипе совет халăхĕ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци турĕ, тĕнчери социализмла пĕррĕмĕш государство турĕ, фашизма хирĕç кĕрешсе çав тери пысăк çĕнтерÿ тума пултарчĕ, хăйĕн çĕршывĕнче коммунизм строительствинче питĕ пысăк çитĕнÿсем турĕ. Сталин юлташ вилнĕ пирки Монголи Халăх Республикинчи ĕççыннисем хăйсен ăслă çулпуçĕпе учительне, тăван ашшĕне тата чи çывăх тусне çухатрĕç.

Аслă Ленинпа пĕрле И. В. Сталин юлташ Монголи халăхне телейлĕ те ирĕклĕ пурнăç патне пымалли тĕрĕс çула кăтартса пачĕ, Монголи халăхне ют çĕршывсенчи тата çĕршыври пусмăрçăсенчен хăтăлма, хăйĕн экономикипе культурине аталантарнă çĕрте питĕ пысăк çитĕнÿсем тума пулăшрĕ. Монголи халăхĕн мĕнпур çитĕнĕвĕсемпе ÿсĕмĕсем, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçĕ, ирĕклĕ те никама пăхăнмасăр пурăнни И. В. Сталин юлташ пирĕн çĕршыври ĕççыннисен ырлăхĕпе телейĕшĕн куллен атте пек тăрăшнинчен килеççĕ. Аслă совет халăхĕ пирĕнпе тăванла туслă пурăнни тата Совет Союзĕпе Монголи хушшинчи çирĕп туслăх та пысăк вырăн йышăнчĕ. Вăл туслăхăн организаторĕ тата хавхалантарса пыраканĕ аслă И. В. Сталин пулнă. Сталин юлташăн ячĕ Монголи халăхĕшĕн питех те хаклă. Пирĕн çĕршыври кашни ĕçчен И. В. Сталин юлташа чун-чĕререн юратать.

Çак йывăр кунсенче тăванла совет халăхĕпе прогрессивлă мĕнпур этемлĕх, çав шутра Монголири ĕççыннисем умне тухса тăнă хурлăх пирки кулянса, Монголи Халăх Республикинчи ĕççыннисем хăйсен пĕрлĕхне тата ытларах çирĕплетме, никам çĕнтерейми Совет Союзĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçме хатĕррине, Ленин—Сталинăн вилĕмсĕр аслă ĕçне вĕçне çитиччен паранса тăма, аслă совет халăхĕпе Монголи халăхĕ хушшинчи туслăха пур майсемпе те тĕреклетсе пыма хатĕрри çинчен пĕр кăмăллă пулса пĕлтереççĕ. Совет Союзĕпе Монголи хушшинчи туслăх пирĕн халăх телейĕн иксĕлми çăлкуçĕ пулса тăрать. Иосиф Виссарионович Сталин юлташ нихçан та асран тухмĕ. Унăн аслă сăнарĕ Монголи халăхĕн чĕрисенче яланах, ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ, Монголи халăхне мир ĕçĕшĕн демократипе социализмăн аслă ĕçĕшĕн кĕрешме хавхалантарса пырĕ. Пирĕн хаклă та юратнă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Иосиф Виссарионович Сталин юлташ çав ĕçшĕн хăйĕн мухтавлă пурнăçне пачĕ.

Монголи Республикин Премьер-Министрĕ ЦЕДЕНБАЛ.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕТНЕ ССР СОЮЗĔН ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ

Мускав.

Радио пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн çулпуçĕпе учителĕ, Корея халăхне ирĕке кăларакан тата унăн чи лайăх тусĕ юратнă Иосиф Виссарионович Сталин вилни çинчен йывăр та хурлăхлă хыпар илсе килчĕ.

Совет халăхĕшĕн кăна мар, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхшĕн те çак йывăр çухату пулнă пирки чунтан-чĕререн хурланни çинчен Корейăри Ĕçлĕх партийĕ тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен Кабинечĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине тата ССР Союзĕн Правительствине пĕлтереççĕ. Корея халăхĕ совет халăхĕпе пĕрле пирĕн умма тухса тăнă хурлăхшăн куляна. Вăл миршĕн, халăхсем хушшинчи туслăхшăн чунтан парăнса малалла кĕрешнĕ. Иосиф Виссарионович хăйĕн пĕтĕм пурнăçне çав ĕçшĕн пачĕ. Ленин—Сталинăн аслă ялавĕ айне пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх тăчĕ. Корея халăхĕ Ленин—Сталинăн аслă ялавне таса тытĕ, малалла çĕклесе пырĕ.

Корейăри Ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен Кабинечĕн Председателĕ

КИМ ИР СЕН.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕТНЕ

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи Коммунистсен партийĕн Нациллĕ Комитечĕ пирĕн юратнă тата хисеплĕ учитель, пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи миллионшар ĕççыннисен çулпуçĕпе руководителĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ вилнĕ пирки хăй чунтан-чĕререн хурланни çинчен Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне тата социализмăн аслă çĕршывĕн мĕнпур халăхне пĕлтерет. Миршĕн хăюллăн кĕрешнĕ, фашизма хирĕç кĕрешнĕ çын, социализмăн хăватлă строителĕ вăхăтсăр вилнĕшĕн эпир сирĕнпе пĕрле тата кулянакан миллионшар çынсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланатпăр.

Халăхăн чăннипех аслă ывăлĕ çинчен пирĕн çĕршывра капитализмла вăрçă чĕртекенсем, хăраса ÿкнĕскерсем, тĕмĕн тĕрлĕ ирсĕр элек сарма, ăна айăплама хăтланчĕç. Вĕсен элекне халăхсем ĕненес çук. Сталин юлташ çĕр çинче чи юратнă этем пулнă, унăн ячĕ пĕтĕм тĕнчери çынсен чĕринче яланах юрать. Сталин юлташ хăйĕн пĕтĕм пурнăçне çав çынсен телейĕшĕн кĕрешес ĕçе пачĕ.

Вăл рабочи класс ĕçне парăнса тăни, марксизм-ленинизм принципĕсене парăнса тăни тата вĕсене творчествăллăн аталантарни, вăл çынсене юратни тата вĕсемшĕн тăрăшни, вăл мĕнпур эксплуататорсемпе пусмăрçăсене курайманни, вăл мирпе прогресăн мĕнпур тăшманĕсене хирĕç кĕрешнĕ чухне хăюллă пулни, вăл çынсене ирĕке кăларма тата социализмла обществăра чечекленме май туса пама тăрăшни, вăл мир ĕçне чунтан-чĕререн парăнса тăни—çакă вăл коммунистсемшĕн тата пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çынсемшĕн вилĕмсĕр пример пулса тăмалла.

Вăл вилни—пĕтĕм этемлĕхшĕн йывăр çухату. Сталин вилчĕ. Çак сăмахсене калама йывăр, вĕсем çĕр чăмăрĕ çинчи чи инçетри кĕтессене те хурлăх илсе пычĕç. Сталин юлташ мире юратакан халăхсен çав тери пысăк вăйне яланах вĕçĕ-хĕррисĕр шанса тăнă. Мире юратакан халăхсем малалла та сталинла мир ялавĕ айĕнче пырĕç, фашизма çĕнĕрен çĕклентерессине тата тĕнчери вăрçа пуçлассине чарса лартĕç.

Сталин юлташăн аслă чĕри малалла та Совет Союзĕнчи мире юратакан халăхăн чĕрисенче тата паттăр, никам çĕнеймĕ Коммунистсен партийĕн членĕсен чĕрисенче тапнине эпир пĕлетпĕр. Эсир çирĕп миршĕн чунтан-чĕререн тăрăшнине ытти мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем, вăл шутра Америка халăхĕн пысăкрах пайĕ те, ырлаççĕ. Иосиф Виссарионович Сталин унăн ĕçĕсенче, унăн вилĕмсĕр произведенийĕсенче малалла пурăнать. Сирĕн аслă çĕршыври ăна юратакан çынсем, Хĕвелтухăç Европăри демократиллĕ çĕршывсемпе Китайри халăхсем, колонисенчи пусмăрти халăхсем, капитализмла çĕршывсенчи эксплуатациленекен рабочисемпе хресченсем, вăл шутра пирĕн çĕршыври негрсемпе шурă ÿтлĕ çынсем те, Сталин юлташ ятне ĕмĕр-ĕмĕрех асра тытĕç. Вĕсене пурне те пĕр шухăш—ирĕклĕхпе миршĕн кĕрешес ĕç пĕрлештерет.

Эпир, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи Коммунистсен партийĕ, хамăр хĕрÿллĕ юратнă Сталин юлташа асăнса, паян хамăрăн ялавсене тайăлтаратпăр. Пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи кулянакан миллионшар çынсемпе пĕрле эпир хурланатпăр, хамăр чунтан-чĕререн хурланни çинчен унăн çĕршывне, унăн халăхне тата унăн партине пĕлтеретпĕр. Миршĕн, демократипе социализмшăн хамăрăн кĕрешĕве вăйлатса, эпир ăна малашне те хисеплесе асăнатпăр.

Пире кирек мĕнле хĕсĕрлесен те, пире хăратаймĕç. Уолл-стритри атомлă маниаксене этемлĕхе юн тинĕсĕнче путарма парас мар тесе, вĕсен тĕнчипе пуç пулса тăмалли фашистла планĕсене пурнăçлама чăрмантарас тесе, эпир Америка халăхне—негрсемпе шурă ÿтлĕ çынсене пĕрлештерес тĕлĕшпе темиçе хут ытларах вăй хурăпăр, çапла вара Сталин юлташа хисеплесе асăнăпăр.

Сталин юлташăн юлашки аслă ĕнĕвĕсенчен пĕри вăл капитализмлă çĕршывсенчи ĕççыннисене демократиллĕ ирĕклĕхсемпе нацин никама пăхăнманлăх ялавне, буржуази кăларса ывăтнă ялава, çĕклеме чĕнсе калани пулчĕ. Пирĕн халăхăн фашизмпа вăрçа хирĕç пыракан кĕрешĕвне вăйлатса, эпир Сталин юлташ ятне асăнса хисеплĕпĕр. Сталин юлташ çĕнĕ тĕнчере ĕмĕр ĕмĕр пурăнĕ. Çав çĕнĕ тĕнче мĕнпур çынсен пулас социализмла пурнăçăн çуттинче çĕкленет.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи Коммунистсен партийĕн Нациллĕ Комитечĕ ячĕпе

УИЛЬЯМ ФОСТЕР,

ЭЛИЗАБЕТ ГЭРЛИ ФЛИНН,

ПЕТТИС ПЕРРИ.

Демократиллĕ Вьетнам Республикин президенчĕ янă телеграмма

КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕТНЕ ТАТА СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛА РЕСПУБЛИКĂСЕН СОЮЗĔН ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ

Пирĕн Аслă çулпуçăмăр, пирĕн хисеплĕ Воспитатель, пирĕн чи хаклă Тус Сталин юлташ вилни çинчен пĕлтернĕ хыпар пирĕн пĕтĕм партие, пирĕн халăха чунтан хурлантарчĕ.

Ĕçлĕх партийĕ ячĕпе, Вьетнам правительствипе халăхĕ ячĕпе тата хам ятпа та Коммунистсен партине, Правительствăна тата Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕнчи халăхсене эпир хурланни çинчен тăванла пĕлтеретĕп.

Сталин юлташ пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхне, вăл шутра Вьетнамри ĕçхалăхне те, ирĕке кăларас тесе калама çук пысăк ĕç тунă. Сталин юлташ вилни пĕтĕм этемлĕхшĕн тавăрма çук пысăк çухату пулса тăрать.

Сталин юлташ вĕрентнишĕн нихçанхинчен çирĕпрех тăрса, эпир Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тавра яланах тачă пĕтĕçсе тăма тупа тăватпăр.

Эпир Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин кăтартса панă çулпа пыма тата хамăр çĕршывăн пĕрлĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн, мир, демократи тата социализм çĕнтерĕвĕшĕн пĕтĕм вăй-хăватпа кĕрешсе пыма тупа тăватпăр.

Эпир, хамăр инçетре пурăннă пирки, Сталин юлташа пытарнă çĕрте пулма пултарайманшăн пăшăрханатпăр.

ХО ШИ МИН.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕТНЕ

Сталин юлташ вилни çинчен пĕлтерни пире чунтан-чĕререн хурлантарчĕ. Эпир аслă Сталин тупăкĕ умĕнче траурлă ялавсене тайăлтаратпăр. Этемлĕх хăйĕн аслăран та аслă генийне, пĕтĕм тĕнчери пролетариат—аслăран та аслă тусĕпе учительне çухатрĕç. Коммунизмшăн кĕрешнĕ аслă çын вилнĕшĕн, вăл ертсе пынипе Совет Союзĕнче социализм çĕнтернĕ, этемлĕхе фашизм тискерлĕхĕнчен çăлса хăварнă çын вилнĕшĕн, вăл ертсе пынипе Совет Союзĕнчи халăхсем коммунизм çулĕ çине тăнă çын вилнĕшĕн чунтан-чĕререн хурланатпăр. Эпир мĕнпур çĕршывсенчи коммунистсен партийĕсен аслă учителĕпе çулпуçĕ вилнĕшĕн, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине—ытти мĕнпур коммунистсен партийĕсемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăракан партие туса хунă çын, хăйĕн генилле произведенийĕсемпе марксизм-ленинизма пуянлатнă тата ăна малалла аталантарнă çын вилнĕшĕн хурланатпăр.

Сталин юлташ кашни тÿрĕ кăмăллă социалистăн, кашни тÿрĕ кăмăллă интернационалистăн сăн-пичĕ мĕнле пулни вăл Совет Союзĕ çине мĕнле пăхнинче палăрать, Совет Союзĕн интересĕсем пĕтĕм тĕнчери мир ĕçĕпе уйрăлми çыхăнса тăраççĕ, тесе каланă,—унăн çак сăмахĕсене эпир нихçан та манас çук. И. В. Сталин халăхсем мир ĕçне вĕçне çитиччен хÿтĕлесе тăрсан, мире хÿтĕлесе хăварма пулать, тесе кăтартса пачĕ,—эпир яланах вăл çапла кăтартса панине асра тытса ĕçлесе пырăпăр.

Австрири коммунистсем аслă Ленин—Сталин партийĕшĕн, мĕнпур халăхсем миршĕн, ирĕклĕхшĕн тата прогресшăн кĕрешессине пуçарса пыракан мухтавлă партишĕн—Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕшĕн яланах шанчăклăн тăма тупа тăваççĕ. Сталин юлташ тупăкĕ умĕнче Австрири коммунистсем çапла тупа тăваççĕ: Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче тăрса, И. В. Сталин кăтартса панă ĕçе туса çитерессишĕн вăя тата пурнăçа та шеллемесĕр кĕрешсе пырăпăр.

АВСТРИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕТНЕ

Мускав.

Юлташсем!

Мĕнпур ĕççыннисен аслă учителĕпе çулпуçĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилнĕшĕн пирĕн парти чунтан-чĕререн хурланни çинчен пĕлтеретпĕр. Сталин юлташ вилни пирĕн чĕресене ыраттарать. Вăл коммунизмшăн тата миршĕн кĕрешсе ĕçлесе пыни Голландири ĕççыннисен чĕринче яланах пурăнĕ. Çак кун эпир Ленин—Сталин партийĕпе пĕр шухăшлă пулнине пĕтĕм вăй-хăватпа палăртатпăр тата Сталин вĕрентĕвĕшĕн тăрса, вăл кăтартса панă çулпа пыма тупа тăватпăр. Çак кун эпир хамăрăн пĕтĕм вăй-хăвата мире сыхласа хăварассишĕн тата Нидерландри ĕççыннисене ют çĕршывсемпе Голландири капитал пусмăрĕнчен хăтарассишĕн пыракан кĕрешĕве пама пулатпăр.

ПАУЛЬ де ГРООТ, ГЕРБЕН ВАГЕНААР, ХЕНК ГОРТЗАК, АННИ АВЕРИНК, ГАРРИ ВЕРХЕЙ, ФРИТС РОЙТЕР, МАРКУС БАККЕР, ФРИДЛ БАРУХ, ЯААП БРАНДЕНБУРГ, ГОЛЛАНДИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔН ТАТА ЫТТИ ЧЛЕНĔСЕМ ТЕ.

Амстердам хули.

Аслă Сталинăн çутă ятне пĕтĕм тĕнче хисеплет

Китай Халăх Республики

ПЕКИН, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пекин тата пĕтĕм Китай ĕçсыннисем, тĕнчери пĕтĕм халăхсем пекех, хăйсен чи лайăх тусĕпе — И. В. Сталинпа сывпуллашрĕç. Столицăн тĕп площадьне ирхине ирех ĕçсыннисен вĕçĕмсĕр колоннисем траурлă митинга пухăнма тытăннă.

Площаде тата площадь патĕнчи урамсене 600 пин çын ытла пухăннă. Траурлă ялавсене çил вĕлкĕштерет. Тĕп трибуна çинче Китай Халăх Республикипе Совет Союзĕн ялавĕсем хушшинче И. В. Сталинăн пысăк портречĕ. Портрет тĕлĕнче хура пурçăн пир çине шурă саспаллисемпе: «Сталин юлташ ĕмĕрсем хушши пурăнать» тесе çырса хунă.

Трибунăсем чечек айне пулнă. Кунта пиншер чечек кăшăлĕ: Китайри Коммунистсен партийĕнчен, Центральнăй Халăх Правительствинчен, çĕршыври ĕçсыннисенчен, вак халăхсен представителĕсенчен, вĕренекенсенчен, çамрăксен демократиллĕ çĕнĕ союзĕнчен тата пионерсен организацийĕсенчен.

Вырăнти вăхăтпа 16 сехет те 50 минут. Трибуна çине Председатель Мао Цзэ-дун, Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн тата Центральнăй Халăх Правительствин членĕсем, демократиллĕ партисемпе обществăллă организацисен руководителĕсем, А. С. Панюшкин юлташ хăпараççĕ.

Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕ, Пекин хула комитечĕн секретарĕ тата Пекин хулин мэрĕ Пын Чжэнь хурлăхлă-чăплă митинг уçăлни çинчен пĕлтерет.

Траурлă кĕвĕ шăрànма тытăнать.

17 сехетре тупă сассисем кĕрлеме пуçлани тата Пекинри заводсемпе фабрикăсем кăшкăртма пуçлани И. В. Сталина пытарни çинчен пĕлтереççĕ. Пĕтĕм Китай Халăх Республикинче 5 минут хушши пурте шăп пулаççĕ. Пĕтĕм площадь шăпланса ларать. Митинг президиумĕн членĕсем, Председатель Мао Цзэ-дунпа пĕрле, И. В. Сталин портречĕ çине хурлăхлăн пăхаççĕ, площадьри пĕтĕм халăхпа пĕрле пуçĕсене таяççĕ.

Завод гудокĕсем кăшкăртма чарăнаççĕ. Председатель Мао Цзэ-дун Китайри Коммунистсен партийĕ ячĕпе, Центральнăй Халăх Правительстви ячĕпе, Халăхăн ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çарĕ ячĕпе тата мĕнпур халăх организацийĕсен ячĕпе халăхсен аслă çулпуçĕн Сталин юлташăн портречĕ умне чечек кăшăлĕ хурать те пуçне таять.

Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, Центральнăй Халăх Правительстви тата Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çар ячĕпе Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ, Центральнăй Халăх Правительстви совечĕн председатель заместителĕ тата Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăх çарĕн главнокомандующийĕ Чжу Дэ сăмах илет. Вăл çапла калать:

«Аслă Сталин юлташ яланлăхах пирĕнтен уйрăлса кайрĕ. Пĕтĕм этемлĕхĕн пысăкран та пысăк çăлтăрĕ сÿнчĕ. Пирĕнтен Китай халăхĕн чи юратнă тусĕ тата учителĕ уйрăлса кайрĕ. Пирĕн умма сасартăк килсе тухнă вĕçĕмсĕр пысăк хурлăх пирки Китай халăхĕ, совет халăхĕпе тĕнчери мĕнпур халăхсем пекех, чĕререн вĕçĕмсĕр хурланать.

Сталин юлташ Китай халăхĕн чи юратнă тусĕпе учителĕ пулса тăрать.

Сталин юлташ: «Совет Союзĕпе Китай Халăх Республики хушшинчи аслă туслăх çĕнĕ агрессие хăратса тăнине хирĕç шанчăклă гаранти, Инçет Хĕвелтухăçĕнче тата пĕтĕм тĕнчере мирĕн хăватлă тĕрекĕ пулса тăрать», тесе каланине Китай халăхĕ нихçан та манмасть. Пĕтĕм Китай халăхĕ, Китайри Коммунистсен партийĕ тата Китай правительстви яланах совет халăхĕпе, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе тата Совет Правительствипе пĕрле тата пĕрлĕхлĕ пулаççĕ, совет халăхне, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийне тата Совет Правительствине тата ытларах шанса пулăшаççĕ. Сталин юлташ хăйĕн пĕтĕм ĕмĕрĕ тăршшĕнче ялан тăрăшнă тата пире хавхалантарнă пĕтĕмĕшлĕ ĕçшĕн çине тăрса кĕрешĕç. Эпир çакна шанса тăратпăр: Ленин—Сталин ялавĕ айне пĕтĕçсе тăнă Китай халăхĕпе совет халăхĕн вăйĕсене никам та çĕнтерес çук. Эпир пирĕн ĕç çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ тăваssа шанса тăратпăр.

Аслă Сталин ĕмĕр пурăнать.

Маркс — Энгельс — Ленин — Сталин вĕрентĕвĕн хăвачĕ эпир çĕнтерÿллĕн малалла пыракан çула ĕмĕр çутатса тăрĕ.

Лăпкă çывăр, Сталин юлташ».

Чжу Дэ хыççăн ыттисем те тухса калаçнă. Митингра çавăн пекех тата Китайри демократиллĕ лига председателĕн Чжан Лань сăмахне вуласа панă.

Тухса калакансем пурте Сталин юлташ вилнĕ пирки чĕререн хурланни çинчен каланă, Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи çирĕп туслăха малалла тĕреклетсе пыма, Совет Союзĕ ертсе пыракан мирпе демократи лагерьне тĕреклетме, империалистла агрессие хирĕç, пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăхшăн кĕрешме, Китайри Коммунистсен партийĕпе Председатель Мао Цзэ-дун ертсе пынипе ăнăçлăн ирĕклĕ çĕнĕ Китай тума тупа тунă.

Митингра çавăн пекех тата А. С. Панюшкин юлташ сăмах тухса каланă.

А. С. Панюшкин сăмахĕ хыççăн оркестр «Интернационал» каланă.

Митинг хупăнать. Столица халăхĕ майĕпен площадьрен саланать. Ĕçсыннисем хăйсен чĕринче этемлĕхĕн аслă генийĕн, Китай халăхĕн чи лайăх тусĕн, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен çулпуçĕн—Сталин юлташăн асран кайми çутă ятне чĕрере тытаççĕ.

Румыни

БУХАРЕСТ, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Иосиф Виссарионович Сталин юлташа пытарнă кун Бухарестра, Сталин площадĕнче, траурлă митинг пулнă. Митинга 400 пин çынна яхăн пынă. Митинг пуçланас умĕн И. В. Сталин юлташăн монуменчĕ умне Румынири рабочисен партийĕн Центральнăй Комитетĕнчен, Министрсен Совечĕнчен, Аслă наци пухăвĕн Президиумĕнчен, Совет Союзĕн Румынири посольствинчен, ĕçсыннисен обществăллă организацийĕсенчен, халăх демократи çĕршывĕсен дипломатиллĕ представителĕсенчен чечек кăшăлĕсем хунă.

Митинга Румынири рабочисен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕ Константин Пырвулеску уçнă. Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Киву Стойка хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă:

Пирĕн мĕнпур çитĕнÿсем, пирĕн мĕнпур çĕнтерÿсем Сталин ячĕпе çыхăнса тăраççĕ. Сталин ячĕпе Румыни халăх Республикин малашлăхĕ çыхăнса тăрать. Эпир Сталин юлташа хĕрÿллĕ юратни пирĕн чĕрере ĕмĕр пурăнĕ.

И. В. Сталин вилни пирĕн чĕресене ыраттарнă вăхăтрах, Румыни халăхне Румынири рабочисен партийĕпе унăн Г. Георгиу-Деж ертсе пыракан Центральнăй Комитечĕ таврa тата тачăрах пĕтĕçсе, И. В. Сталин кăтартса панă çулпа пĕр пăркаланмасăр малалла пыма хăват илет.

Киву Стойка митинга пухăннисене пролетариллĕ интернационализм ялавне çÿлте тытса пыма, аслă Совет Союзĕпе, халăх демократи çĕршывĕсемпе тытакан туслăхпа çирĕп союза тĕреклетме чĕннĕ.

Митингра çавăн пекех хĕçпăшаллă вăйсен министрĕн заместителĕ Леонтин Сэлэжану, наукăсен академийĕн президенчĕ Траян Савулеску, социализмлă ĕç геройĕ токарь-стахановец Николас Васу, ĕçсынни çамрăкĕсен союзĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Кицу Флора, ткачиха-стахановка Параскива Матей тухса каланă.

Митинга пухăннисем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне, ССР Союзĕн Министрĕсен Советне тата СССР Верховнăй Совет Президиумне хурлăхлă телеграмма янă.

Вырăнти вăхăтпа шăп 11 сехетре 24 хутчен артиллери залпĕ кĕрлесе каять, фабрикăсем, заводсем, пăравуссем кăшкăртма пуçлаççĕ. Румынири ĕçсыннисем аслă Сталина асăнса 5 минутлăха ĕçе чарса лартаççĕ.

Чехословаки

ПРАГА, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхине ирех Вацлав площадьне тата унăн çывăхĕнчи урамсене халăх пухăннă.

Чехословакипе СССР государство ялавĕсене тайăлтарнă.

8 сехет те 20 минут. Нациллĕ музей балконĕ çине Антонин Запотоцкипе пĕрле правительство членĕсем, Чехословакири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕсем, Совет Союзĕн Чехословакири послĕ А. Е. Богомолов тухаççĕ.

Траурлă митинга премьер-министр Антонин Запотоцкий уçать. Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Вилем Широкий Чехословаки халăхĕ Иосиф Виссарионович Сталин хушса хăварнисене пăхăнса тăрасси çинчен çырнă присяга текстне вуласа парать. Артиллери залпĕ кĕрлесе каять.

Çĕршер пин халăх виçĕ хутчен: «Тупа тăватпăр! Тупа тăватпăр! Тупа тăватпăр!» тесе кăшкăрать.

Митинг хупăннă хыççăн ĕçсыннисем Мускавран паракан траурлă митинга, Совет государствин çулпуçĕсен сăмахĕсене итлеççĕ. Вĕсен чĕрисене хурлăхпа пĕрлех шанăç кĕрет: халăхсене малашнехи çĕнтерÿсем патне илсе каякансем пур, аслă Иосиф Виссарионович Сталинăн ĕçне туса пыракансем пур. Коммунизм пулать!

Демократиллĕ Корея Халăх Республики

ПХЕНЬЯН, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пхеньянра Корейăри Ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин министрĕсен кабинечĕн тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Верховнăй Халăх Пухăвĕн Президиумĕн, Пхеньян хулинчи партипе обществăллă организацисемпе пĕрле, Иосиф Виссарионович Сталин ячĕпе траурлă лару пулнă. Ларура маршал Ким Ир Сен, Кин Ду Бон, Хе Гай, Пак Чан Ок, Ким Дар Хен, партипе правительствăн тата ытти руководителĕсем те пулнă. Çавăн пекех ларура Совет Союзĕн Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи послĕ Разуваев тата Пхеньянри ытти дипломатиллĕ миссисен пуçлăхĕсем пулнă.

Пхеньянра, Вонсанра, Синьыйчжура, Нампхора, Хэчжура, Кангра, Чхоньчжинра, Хамхынра Иосиф Виссарионович Сталина пытарнă самантра артиллерирен персе салют панă.

Монголи Халăх Республики

УЛАН-БАТОР, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Улан-Батор халăхĕ Суха-Батор ячĕпе тăракан площаде И. В. Сталин юлташ ячĕпе иртерекен траурлă митинга пухăннă.

Кăнтăрла иртсен икĕ сехетре маршал Чойбалсан ÿтне пытарнă усыпальница трибуни çине Монголири революциллĕ халăх партийĕн Политбюро членĕсемпе Монголи Халăх Республикин правительство членĕсем хăпараççĕ. Митингра Монголири революциллĕ халăх партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Дамба, генерал-майор Цот, работница Дуламсурун, арат Чоймбол, географи наукисен кандидачĕ Цегмид тухса каланă.

Аслă Сталин тупăкĕ умĕнче, тенĕ Дамба, эпир вăл кăтартса хăварнă çулпа çирĕппĕн пыма тупа тăватпăр.

Работница Дуламсурун Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне, Монголири революциллĕ халăх партийĕн Центральнăй Комитетне, Монголи рабочи халăхĕ аслă Сталин ĕçне тивĕçлĕ пулĕ, тесе шантарса калать. Арат Чоймбол Монголи арачĕсен ячĕпе тупа тăвать.

Митинг хупăнать, анчах никам та саланмасть. Хăватлă репродукторсем Мускавран паракан передачăна пуçлаççĕ. Митинга пухăннисем И. В. Сталина пытарни çинчен Мускавран паракан передачăна хумханса итлеççĕ.

Тăванла совет халăхĕпе пĕрле, çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур ĕçсыннисемпе пĕрле Монголи халăхĕ хăйĕн чи çывăх тусĕпе, ашшĕпе тата учителĕпе Иосиф Виссарионович Сталинпа сывпуллашать.

Германи

БЕРЛИН, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Совет халăхĕпе пĕрле Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕçсыннисем — совет халăхĕпе пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçне Иосиф Виссарионович Сталина юлашки çула ăсатса ячĕç.

Вырăнти вăхăтпа ирхине 10 сехетре, И. В. Сталина пытарнă вăхăтра, Берлинра тата Демократиллĕ Германи Республикинчи мĕнпур хуласемпе ялсенче нимĕç халăхĕн чи лайăх тусне Иосиф Виссарионович Сталина асăнса пурте шăп пулаççĕ.

Фабрикăсенче, заводсенче, учрежденисенче 5 минутлăха ĕç чарăнса ларать, хуласемпе ял урамĕсем хушшинче, шоссе çулĕсемпе ахаль çулсем çинче, гаваньсемпе портсенче пурте пĕр вырăнта чарăнса тăраççĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилнĕ майпа Берлинра Германири Пĕрлĕхлĕ социалистла партин Центральнăй Комитечĕн, Демократиллĕ Германи Республики правительствин, Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палатипе Çĕрсен палати президиумĕсен траурлă ларăвĕ пулнă.

Ларура пулнисем И. В. Сталин юлташăн çутă ятне хисеплесе 5 минут хушши ура çинче тăраççĕ. Совет Союзĕн Государство гимне тата Демократиллĕ Германи Республикин Государство гимне каланă хыççăн, Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министр заместителĕ доктор Лотар Больц Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ тата ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ чĕнсе каланине вуласа панă. Ун хыççăн Германири Пĕрлĕхлĕ социалистла партин Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕ Германири пĕрлĕхлĕ социалистла партин Центральнăй Комитечĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилнĕ пирки КПСС Центральнăй Комитетне янă телеграммăна вуласа панă.

Траурлă ларура И. В. Сталин юлташ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче каланă сăмаха вуласа панă.

Лару хупăннă хыççăн ларура пулнисем Берлин халăхĕпе пĕрле Сталин аллейинче тăракан И. В. Сталин монуменчĕ патне кайнă. Сталин монуменчĕ патне халăх тĕттĕм пуличчен çаплах пырса тăнă.

Берлин вăхăчĕпе 10 сехетре делегацисем пурте çул çинче чарăнса тăраççĕ. Вĕсем пурте 5 минут хушши шăп тăрса аслă Сталин ятне чыс тăваççĕ.

... Берлинти предприятисен, учрежденисен, шкулсен делегацийĕсем вĕçĕмсĕр памятник патне пырса тăраççĕ, унта чечек кăшăлĕсем тата чĕрĕ чечексем хураççĕ.

БЕРЛИН, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Берлинра Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палатин Президиумĕн траурлă ларăвĕ пулнă. Ларăва Иоганнес Дикман председатель пулса ертсе пынă.

БЕРЛИН, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер пĕтĕм Хĕвеланăç Германире пухусемпе митингсем пулса иртнĕ. Унта ĕçсыннисем мире юратакан мĕнпур прогрессивлă этемлĕхĕн аслă çулпуçне И. В. Сталина хисеплесе чыс тунă.

АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвеланăç Берлинри çĕршер ĕçсыннисем çапăçса вилнĕ совет воинĕсен Тиргартенра лартнă памятникĕ патне (Англи секторĕ) аслă Сталина чыслама пынă. Памятник патне вырнаçтарса лартнă И. В. Сталин портречĕ умне Хĕвеланăç Берлинри ĕçсыннисем чечек кăшăлĕсемпе чечек çыххисем хунă.

Памятник умне чечек кăшăлĕсем хунă хыççăн Хĕвеланăç Берлинри ĕçсыннисем И. В. Сталин юлташа пытарнă май Берлинри ĕçсыннисемпе пĕрле Сталин аллеи патне кайнă.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Политикăллă комитетра

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС) Политикăллă комитет ĕнер ирхи ларура Корея ыйтăвне сÿтсе явассине вĕçленĕ.

Çак ыйту тăрăх пулнă дискусси çакна кăтартрĕ: Америкăпа Англи блокĕ тата Америкăн агрессиллĕ политикине хÿтĕлекен çĕршывсем Корейăри вăрçа чарса лартасшăн мар, пачах урăхла, вĕсем çак вăрçа малалла туса пырасшăн. Политикăллă комитетра Америка делегацийĕ тата ун майлă тăракансем Корейăра вăрçă ĕçĕсене, СССР делегацийĕ сĕннĕ пек, халех тата пĕтĕмпех чарса лартмалла тăвассине хирĕç тăчĕç. Малтан, Генеральнăй Ассамблейăн VII-мĕш сессийĕн иккĕмĕш пайĕ пуçланас умĕн, шутланă пек, Корейăра вăрçă ĕçне малалла туса пыма тата ăна аслăлатма уççăнах чĕнекен резолюци проектне йышăнтарма май килес çуккине курса, США делегацийĕ, хăйпе пĕрле Корейăра вăрçă вăрçакан ытти çĕршывсем пулăшнипе, çак ыйту тăрăх нимĕнле резолюци те тăратмалла мар тунă. Корея ыйтăвĕ тăрăх нимĕнле конкретлă решени те пулманни Америка агрессорĕсене кирлĕ. Америка агрессорĕсем, Америка хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, малашне Корейăра, Пĕрлешнĕ нацисен организацине айккинче тăратса хăварса, хăйсем тĕллĕн ĕçсем тума хăтланаççĕ, вĕсем вăрçă ĕçĕсене вăйлатнипе хăйсен агрессиллĕ тĕллевĕсене пурнăçа кĕртме шутлаççĕ. Çакăн çинчен нумаях пулмасть США представителĕсен палатин комиссийĕнче генерал Ван Флит каланă. Корея ыйтăвĕ тăрăх çакнашкал позици йышăнса, США делегацийĕ тата ытти ултă делегаципе пĕрле (Англи, Франци, Канада тата ыттисем те) Корея халăхне «пулăшу парасси» çинчен резолюци тăратнă. Çак резолюци тĕллевĕ вăл,— Корея халăхне «пулăшма» кирли çинчен икĕпитлĕн каласса, «Корейăна пĕрлештерес тата ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен ООН комиссийĕ» тенĕскерне тата «Корейăна ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен ООН Генеральнăй агентне» малашне те хăйсен ĕçĕсене туса пыма май памалла тăвассишĕн тăрăшни пулать. Çак органсем иккĕшĕ те Америка агрессорĕсен хĕçпăшалĕ пулса тăраççĕ.

Ĕнерхи ирхи ларура СССР представителĕ В. А. Зорин тухса каланă. Вăл: Корея ыйтăвĕнчи тĕп задача вăл—Корейăри вăрçă ĕçĕсене чарса лартасси пулать, тесе Совет делегацийĕ темиçе хутчен те кăтартса панă, тенĕ. Совет делегацийĕ хăй вăхăтĕнче Корейăри вăрçă ĕçĕсене халех чарса лартасси çинчен тата Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелес тĕлĕшпе комиссии туса хурасси çинчен ыйту тăратнă. Совет делегацийĕ çавăн пекех тата комитета çакăн çинчен те асăрхаттарнă: Корейăна пĕрлештерес тата ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен ООН комиссийĕ, тĕрĕссипе, Америкăн Корейăри командованине пулăшса пыракан органĕ пулса тăнă, çак комисси Корейăна пĕрлештерме те, ура çине тăратма та пулăшмасть, вăл Америка интервенчĕсене ООН ялавĕпе витĕнсе тискер ĕçсем тума кăна пулăшать.

«Корейăна ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй агент, тенĕ малалла Зорин, комисси пекех, Америка командованийĕ хушнă тăрăх ĕçлесе тăрать. Америка делегацийĕ тухса каланинчен çакă курăнать: «Корейăна ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй агент», пуринчен ытла, Корейăра вăрçă ĕçĕсене малалла туса пырас тĕлĕшпе Америка командованине кирлĕ çулсемпе кĕпересене юсас тĕлĕшпе ĕçлесе тăнă. «ООН комиссийĕ» те, «генеральнăй агент» та политикăллă комитета тăратнă докладсем тăрăх, Корейăна ура çине тăратас ыйтусем, тĕрĕссипе, çак комиссишĕн тата çак агентшăн вăрçă ыйтăвĕсем пулса тăраççĕ. СССР представителĕ çакна та кăтартса панă. Генеральнăй агент хăйĕн докладĕнче; «Пĕтĕмĕшлĕ вăрçă ирĕксĕрех укçа-тенкĕ питĕ нумай расходламалла тăвать, çавăн пекех тата потребитель таварĕсен продукцине тата халăх ыйтăвне тивĕçтерессине кĕретĕнех чакарасси патне илсе пырать», тесе çырать. Çавăн пекех вăл: Корейăна ура çине тăратмалли ыйтусем, вăрçă ыйтăвĕсемпе танлаштарсан, ирĕкçĕрех, иккĕмĕш вырăн йышăнаççĕ, тесе çырать. Çапла вара вăл хăйĕн ĕçĕ, тĕпрен илсен, Америка командованийĕн вăрçă ыйтăвĕсене тивĕçтересси пулнине йышăнать.

Çавăнпа та, тенĕ Зорин, Совет делегацийĕ, çичĕ делегаци резолюцийĕ Корейăна ура çине тăратас ыйтуемпе пачах çыхăнмасть тесе шутлать, çавăнпа та çак резолюцине хирĕç сасăлать. Хăй енчен Совет делегацийĕ комитетра пăхса тухма çакăн пек резолюци проектне тăратма кирлĕ тесе шутлать: «Генеральнăй Ассамблея çапла йышăнать: Корейăна пĕрлештерес тата ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен ООН комиссине, вăл хăйĕн умне кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама пултарайман пирки, салатса ямалла».

СССР делегацийĕ тăратнă резолюци проектне хÿтĕлесе тата çичĕ держава резолюцине хирĕçлесе Польша ют. çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Скшешевский сăмах тухса каланă. Вăл Корейăна пĕрлештерес тата ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен ООН комиссийĕ тенĕскер тата «Корейăна ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен ООН агенчĕ» Америкăн Корейăри çар командованийĕн ĕçне тăвакансем пулса тăнине, вĕсен пĕтĕм ĕçĕ Корея халăхне пулăшасси мар, агрессорсене Корейăра вăрă-хурахла ĕçсем туса пыма пулăшасси пулнине чылай фактсемпе çирĕплетсе панă. Польша представителĕ тата çакна асăрхаттарнă. Америка делегачĕ Лодж Корея ыйтăвĕ тăрăх пĕтĕмĕшле дискусси пынă чухне: Пĕрлешÿллĕ Штатсем Корея хирĕçĕвне мирлĕ майпа татса памалли çулсем шырамалла мар, вĕсен «вăрçăра çĕнтерÿ» тума тăрăшмалла, тенĕ. Америка делегачĕ «Корея халăхне пулăшу парассине вăйлатма» чĕнсе калани вăл сĕмсĕррĕн икĕпитленни пулать, тенĕ Польша представителĕ.

Америка агрессорĕсем Корея халăхне мĕнле «пулăшни» пурне те паллă ĕнтĕ. Çав «пулăшу» Америка самолечĕсем Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсене ишĕлтересе тăкни, мирлĕ халăх çине вăрă-хурахла тапăнни, бактериллĕ хĕçпăшалпа, мирлĕ халăха пĕтерес тĕлĕшпе ытти çавнашкал ирсĕр меслетсемпе усă курни пулать. Корейăна пĕрлештерес тата ура çине тăратас тĕлĕшпе мĕнле те пулин ĕç тума тытăначчен малтан Корейăри вăрçă ĕçĕсене халех чарса лартни кирлĕ. Çакăн пек тусан кăна ĕç тухассине Польша делегацийĕ чĕререн ĕненсе тăрать, тенĕ Скшешевский.

Юлашкинчен Польша представителĕ: Польша делегацийĕ Корейăна пĕрлештерес тата ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен ООН комиссийĕ тенĕскерне пĕтересси çинчен СССР делегацийĕ тăратнă сĕнĕве йышăнать, тенĕ, мĕншĕн тесен, çакăн пек туни Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассине çăмăллатассине Польша делегацийĕ чĕререн шанса тăрать, тенĕ вăл.

Çичĕ çĕршыв тăратнă резолюци проектне хÿтĕлесе Канада, Турци, Доминикан республики, Уругвай тата ытти хăшпĕр çĕршывсен представителĕсем тухса каланă.

Скшешевский хыççăн Чехословаки ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ В. Давид тухса каланă. Вăл Корейăна пĕрлештерес тата ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен ООН комиссийĕ тенĕскерĕн ĕçне пур енчен те тĕплĕн критикленĕ, çав комиссипе агент Америкăн Корейăри агрессорĕсене пулăшакан пулса тăнине тата Инçет Хĕвелтухăçĕнче Америкăн агрессиллĕ планĕсене пурнăçлама пулăшакан пулса тăнине кăтартса панă. Чехословаки представителĕ çак комиссие пĕтерес тĕлĕшпе Совет Союзĕн делегацийĕ тăратнă резолюци проекчĕ майлă пулнă.

Англипе Америка блокĕн ытларахăшĕ, Корейăна пĕрлештерес тата ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен ООН комиссине пĕтерессi çинчен Совет делегацийĕ тăратнă сĕнĕве сирсе янă, çичĕ çĕршыв тăратнă резолюци проектне йышăннă. Çичĕ çĕршыв делегацийĕ тăратнă резолюцие хирĕç СССР, УССР, БССР, Польша тата Чехословаки делегацийĕсем сасăланă.

Хула Совечĕн сессийĕ

Мартăн 10-мĕшĕнче Шупашкарта, Советсен çуртĕн Пысăк залĕнче, юлашки суйлаври суйланă ĕçсынни депутачĕсен хула Совечĕн пĕрремĕш сессийĕ пулчĕ.

Сессие чи ватă депутат, РСФСР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительници **А. В. Черпакова** уçрĕ.

— Ĕçсынни депутачĕсен тăваттăмĕш созыври хула Совечĕн пĕрремĕш сессийĕ хăйĕн ĕçĕсене пирĕн çĕршывшăн хурлăхлă кунсенче тăвать,—терĕ вăл.—Пирĕн тăван, хамăр хĕрÿллĕ юратакан çулпуç, учитель тата тус Иосиф Виссарионович Сталин пирĕнтен уйрăлчĕ. Аслă Сталина ура çине тăрса хисеплер.

Залри çынсем пурте ура çине тăраççĕ. Темиçе минут хушши залра шăп.

Малалла Черпакова юлташ пирĕн халăха ĕçпе кĕрешÿре Ленинăн шанчăклă соратникĕ Сталин яланах хавхалантарса пыни çинчен, вăл пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетес, хамăр çĕршыв хăватне ÿстерес, çĕршывра коммунизм тăвас тĕлĕшпе калама çук нумай ĕçлени çинчен каларĕ.

Черпакова юлташ халăх депутачĕсем мĕнле пулмалли тата ĕçлемелли çинчен И. В. Сталин 1937 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче каланă сăмаха аса илтерет, депутатсене аслă Сталин хушса хăварнисене çирĕппĕн пурнăçласа пыма чĕнет.

Депутатсем сессире председатель пулма **Н. Н. Никитин** депутата тата секретарĕ пулма **А. С. Ягодкина** депутата суйлаççĕ.

Президиум сĕтелĕ умĕнче председатель вырăнне йышăнса, Никитин юлташ Коммунистсен партийĕ Сталин ертсе пынипе тунă пысăк çитĕнÿсем çинчен, Сталинăн вилĕмсĕр ятне пирĕн Тăван çĕршыври ĕçсыннисем тата пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх яланах асра тытасси çинчен каласа пачĕ.

Унтан Никитин юлташ депутатсен тата совет çыннисен обязанноçĕсем çинчен каларĕ, И. В. Сталина пытарнă чухне Г. М. Маленков юлташ совет çыннисен таса тивĕçĕсем пирки каласа панисене яланах асра тытма тата пурнăçласа пыма кирлине палăртрĕ.

Н. И. Кириллов депутатпа (электроаппаратура завочĕ) **Г. И. Иванова** депутат (Чапаевски поселок) предприятисенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем юратнă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр И. В. Сталин вилнĕ пирки хытă хурланни çинчен пĕлтерчĕç. Вĕсем хăйсем ĕçлекен заводсен коллективĕсем Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçесси, социализмла государствăн вăй-хăватне ÿстерессишĕн тата хытăрах тăрăшса ĕçлесси çинчен, хула Совечĕ тата депутатсем умне пысăк ĕçсем тухса тăни çинчен каларĕç.

Вĕсем тухса каланă хыççăн **Л. Х. Михайлов** депутат сăмах илчĕ. Вăл хула Совечĕн сессийĕ ячĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне, ССР Союзĕн Министрĕсен Советне, СССР Верховнăй Совет Президиумне депутатсемпе сессие пухăннă çынсем совет халăхĕпе пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен çулпуçĕ Сталин вилнĕ пирки чĕререн хурланни çинчен пĕлтерсе çыру яма сĕнчĕ, çав çырăвăн текстне вуласа пачĕ.

Депутатсемпе сессие пухăннă çынсем çыру текстне пĕр шухăшлă пулса йышăнчĕç.

Унтан сесси мандат комиссине суйларĕ.

Мандат комиссийĕн докладне **А. П. Швечков** депутат туса пачĕ. Хула Советне пĕтĕмпе 188 депутат суйланă. Вĕсене пурне те депутата суйлама коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ кандидата тăратнă. Мандат комиссийĕ пур депутатсен полномочийĕсем те тĕрĕс тесе палăртнă. Депутатсем хушшинче парти членĕсемпе кандидачĕсем 111 çын (59 процент), партире тăманнисем 64 çын (34 процент), комсомолецсем 13 çын (7 процент). Хула Советĕнче хĕрарăм-депутатсем 83 çын.

Сесси мандат комиссийĕн докладне çирĕплетрĕ.

Организациллĕ ыйтусене пăхса тухса, сесси хула Совечĕн исполком председателĕ пулма **Н. П. Енчиков** депутата, председателĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма **А. В. Киселев**, председатель заместителĕ пулма **В. С. Сергеева**, секретарĕ пулма **Л. А. Мышкина** депутатсене суйларĕ. Исполком членне çак депутатсене суйларĕç: **Н. Н. Никитин** (КПСС хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ), **А. Ф. Бекренев** (пир-авăр комбиначĕн директорĕ), **Г. И. Иванова** (Чапаевски поселок), **К. П. Ладин** (исполкомăн коммунальнăй хуçалăх пайĕ), **Н. И. Кириллов** (электроаппаратура заводĕнчи аслă мастер), **Ф. Д. Дмитриева** (Чăваш педагогика институчĕн аслă преподавателĕ), **П. В. Попов** (электромеханически техникум преподавателĕ), **Н. И. Винокурова** (хула план комиссийĕн председателĕ), **Е. Г. Тарасова** (исполкомăн финанс пайĕн заведующийĕ), **А. И. Русанов** (хулари милици уйрăмĕн начальникĕ), **С. М. Миронов** (Сосновка поселок Совечĕн председателĕ).

Сесси хула Совет исполкомĕн пайĕсен заведующийĕсене тата хула Совечĕн яланхи комиссийĕсене уйăрса çирĕплетрĕ.

Кун хыççăн сесси хупăнчĕ.

Редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем Америкăра Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ.

США ЧАН КАЙ-ШИ БАНДИСЕНЕ ХĔÇПĂШАЛЛАНТАРАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Рангунри корреспонденчĕ Хьюлэтт çапла çырать: «Бирма çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, вĕлернĕ е тыткăна илнĕ Китай националисчĕсем (гоминдан бандичĕсем.— **Редакци**) сумĕнче Америка туса кăларнă çĕнĕ карабинсем, минометсем, çавăн пекех тата реактивлă хĕçпăшалсем те тупнă... Бирмăри официальнăй çынсем Чан Кай-шин Бирмăри бандисене Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хĕçпăшал тăратаççĕ тесе шутлаççĕ».

ХĔВЕЛАНĂÇ БЕРЛИНРА ФАШИСТСЕМ ИРТĔНЕÇÇĔ

БЕРЛИН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çак иртнĕ кунсенче фашистла бандитсем Шенеберг тата Штеглиц районĕсенче (Берлинăн Америка оккупацилесе тăракан секторĕ) Социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн çурчĕсем çине тапаннă.

Фашистсем, алăка ватса, Шенебергра СЕПГ çуртне çĕмĕрсе кĕнĕ. Вĕсем стенасем çинчи картинăсене илсе пăрахнă, ялавсене çурнă та килкартинче çунтарса янă. Хĕвеланăç Берлинри полици бандитсене хирĕç нимĕн те туман.

Штеглицра фашистсен ушкăнĕ Социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн çуртне çĕмĕрсе кĕме хăтланнă.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Мартăн 13-мĕшĕнче чăвашла спектакль **«ÇЕМЬЕ ЧЫСĔ».**

Мартăн 14-мĕшĕнче чăвашла спектакль **«НАРСПИ».**

Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

ИТ 01032 Типографи №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20,000 экз.